Коммунистсен фракцийёнче пулнă, халь – эсерсен ретёнче, ўлём ăçта?
ДЕПУТАТ СУЯПА ИНÇЕ КАЯСШĂН 2

Шкулта вёреннё чухнех сывлăх сыхлавçи пулма ёмётленнё
ÇЕМЙИПЕХ КĂМĂЛЛАСА ВУЛАÇÇЁ 3

Василий Пушкин: "Ывăлăмсене те хамăрăн хушамата тивёçлё пулмалла тесе вёрентетёп"
"ЧĂВАШ ЯТНЕ ЯРАС ТЕМЕН" 4

ПАЯН ВУЛĂР ТЕПЁР НОМЕРТЕ

Тăвай районёнчи Çёнё Ишпуçра хаçат-журнала 3 уйăх ялти лавккана пырса илеççё
ПОЧТАЛЬОН ПУЛМА КАМ КИЛЁШЁ-ШИ? 2

Коррупцие кёçех тёппипех кăклăпăр теме иртерех-ха
"КРИМ" хушма кăларăм 3

Раиса Сарпи Пётём Раççейри ирони фестивальне хутшăннă
ЛИРИК КУЛĂШЛА СĂВĂСЕМ ТЕ ÇЫРАТЬ 4

чăваш халăх хаçачё

1906 çулхи кăрлачăн 21-мёшёнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхёнчен тёрлё ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мёшёнче "ХЫПАР" ятпа тепёр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашён Президиумё 1968 çулхи пуш /март/ уйăхён 11-мёшёнче "Коммунизм ялавё" /халё "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никёслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

235 /26390/№ Ытлари кун, 2013, раштав (декабрь), 10 Хакё ирёклё WWW.hypar.ru

Пассажирсем хăтлăха туйччăр

Раштавăн 9-мёшёнче Чăваш Ен Пуçлăхё Михаил Игнатьев республика Правительствин членёсемпе, федераци влаç органёсен территори управленийёсен тата муниципалитетсен ертўçисемпе канашлу ирттернё.

Канашлăва хутшăннисем 2013 çулта Чăваш Республикин «Шупашкар» аэропорчё» хысна предприятийён ёç эффективлăхне сўтсе явнă. Унăн директорё Александр Жирнов пёлтернё тăрăх – кăçал предприяти 2601 рейса тата 36 пин ытла пассажира тивёçтернё. Шупашкар хулинчи аэропорт-ран Мускава, Анталине, Сочине, Санкт-Петербурга, Сургута, Ёпхёве рейссем тунă. Авиарейссене вăхăтра яманни, пăрахăçлани пулкаланă, çапах та хысна предприятийён айăпёпе мар. Авиабилет хакёсем 25% чакнă.

Республика Пуçлăхё пассажирсен хăрушсăрлăхпа хăтлăх ыйтăвё тёп вырăнта пулмаллине каланă. Шупашкар аэропортёнче ку чухнехи условисем йёркелеме, чăрмавсăр ёçлессине тивёçтерме кирлё мерăсем йышăнмалла. Михаил Игнатьев авиалинисем çинчи лару-тăру çинчен пассажирсене вăхăтра пёлтерсе тăмаллине палăртнă. «Çитес çёре транспортăн урăх енёпе каймашкăн пассажирсен рейса пăрахăçлани çинчен малтанах пёлмелле», – тенё вăл.

Раççей Федерацийён Конституцине йышăннăранпа 20 çул çитнине уявлама мёнле хатёрленни çинчен юстици министрё Надежда Прокопьева пёлтернё. Уяв мероприятийёсене вёренў заведенийёсенче тата культура учрежденийсенче ирттереççё. Республикăри вулавăшсем, культурăпа кану учрежденийёсем куравсем, викторинăсем, каласусем, вăйă программисем ирттернё. Конституцин тёп положенийёсене халăх хушшинче сарма МИХсем нумай пулăшаççё.

РФ Конституцине йышăннăранпа 20 çул çитнине халалланă савăнăçлă уяв 2013 çулхи раштавăн 11-мёшёнче Чăваш патшалăх операпа балет театрёнче иртет.

■ А.ВАСИЛЬЕВА

"Хыпар" хаçат парнисемшён

Юбилейлă турнирта – чи вăйлисем

Раштавăн 7-8-мёшёсенче "Хыпар" хаçат тимёр вăйийипе туслисене Пётём Раççейри XXX турнира йыхравларё. Ку хутёнче ăмăрту Кўкеçри «Улăп» физкультурăпа спорт керменёнче иртрё

Ăмăрту савăнăçлă парадран пуçланчё. Спортсменсемпе тренерсене ЧР Министрсен Кабинечён председателён пёрремёш çумё – ЧР Пуçлăхён Администрацийён ертўçи Александр Иванов, ЧР Патшалăх Канашён Председателён çумё, Чăваш наци конгресён вице-президенчё Олег Мешков, Шупашкар район администрацийён пуçлăхё Георгий Егоров, ЧР физкультурăпа спорт тата туризм министрён çумё Сергей Шелтуков, "Хыпар" хаçатăн тёп редакторён çумё Михаил Арланов, республикăри кире пуканё спорчён федерацийён ертўçи Юрий Карпов, тёнче категориллё судья Сергей Бронников /Киров облаçё/, СССР спорт мастерё Касим Гилязетдинов /Чёмпёр облаçё/, Вагиз Сунгатов /Тутарстан/ профессор саламларёç.

Шупашкар район администрацийён пуçлăхё Георгий Егоров турнир Кўкеç тăрăхёнче иртнишён савăннине пёлтерчё: «Вăйлă çынсем яланах хисепре пулнă. Вёсене мухтаса юмахсем хайланă, юрăсем кёвёленё. Кире пуканён спорчё халăх вăйийинчен спорт тёсё пулса тăнăскер, хальхи вăхăтра та вăйлисемпе хăюллисене илёртет. Паянхи ăмăрту та çёнё çитёнўсемпе тата паттăр чемпионсемпе палăрса юлё».

ЧР Патшалăх Канашён Председателён çумё Олег Мешков спорт уявне пушă алăпа пыман, вăл Патăрьелпе Шăмăршă районёсенчи пур шкула та кире пуканён комплектне парнелессине пёлтерчё. «Сывă пурнăç йёркине пăхăнакан тата спортпа туслă çыннăн сывлăхё ялан çирёп, вăл нимёнле йывăрлăхран та хăрамасть. Тимёр вăйийипе кăсăкланакан вара илемлё, вăйлă, ёçре хастар, вёренўре тăрăшуллă. Кире пуканён спорчёпе чылай çын интересленет: вёсен йышёнче эпир арçынсене кăна мар, хўхём пикесемпе маттур хёрарăмсене, пултаруллă яшсемпе сумлă ветерансене куратпăр. Çавăнпа çёр-шывра, республикăра, район-хулара вун-вун ăмăрту иртет. Спортăн çак тёсне аталантарас тёллевпе Чăваш Ен правительствипе ЧР Патшалăх Канашё малашне те чылай ёç пурнăçлёç», – терё Олег Вадимович.

ЧР физкультурăпа спорт тата туризм министрён çумё Сергей Шелтуков «Хыпар» хаçат тухма пуçланăранпах сывă пурнăç йёркине сарас тата физкультурăпа спорт аталанăвне çутатас енёпе тăрăшнине, паян та кашни кăларăмра тёрлё ăмăртура палăрнă спортсменсемпе вёсен пултаруллă вёрентекенёсем çинчен çырнине каларё. Турнирта пёрре мар мала тухнă Елчёк каччине Александр Павлова «Раççей спорт мастерё» ята тивёçнине ёнентерекен удостоверени пачё.

Ăмăртăва çёр-шывăн сакăр регионёнчен 300 ытла спортсмен хутшăнчё. Ку – рекорд! Елчёк, Канаш, Патăрьел, Шупашкар, Улатăр, Йёпреç, Вăрнар, Куславкка, Çёрпў, Тăвай тăрăхёнчи паттăрсемпе вăй виçме помост çине Чёмпёр, Чул хула, Киров облаçёсенчен, Тутар, Коми, Мордва тата Мари республикисенчен килнё чи вăйлă атлетсем тухрёç. Турнирăн пёрремёш кунёнче хёрсемпе хёрарăмсем, яшсемпе арçынсем тупăшрёç, тепёр кун ветерансем ăмăртрёç тата командăсен эстафети иртрё.

Уява пынисене районти ўнер шкулён çамрăк артисчёсемпе «Улăп» спорт комплексён хастарёсем, Кўкеçри халăх ансамблё илемлё ташăюрăпа савăнтарчёç. РФ культурăн тава тивёçлё ёçченё Арсений Яйцов та тёрлё халăх кёвви-çеммипе тыткăнларё.

Тёплёнрех – çитес кăларăмра.

■ Андрей ПЕТРОВ.

Геннадий ВЕРБЛЮДОВПА Александр МИХАЙЛОВ сăн ўкерчёкёсем

Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхён 2013 çулхи раштав уйăхён 7-мёшёнчи 125-мёш указёпе килёшўллён чăваш наци культурипе искусствин аталанăвне пысăк тўпе хывнăшăн тата професси пысăк ăсталăхёшён Чăваш Республикин "К.В.Иванов ячёллё Ёçлёх Хёрлё Ялав орденлё Чăваш патшалăх академи драма театрё" автономи учрежденийён драма артистне – сценăн ертсе пыракан мастерне **Нина Ильинична ГРИГОРЬЕВĂНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИ УМЁНЧИ ТАВА ТИВЁÇЛЁ ЁÇСЕМШЁН" орденпа** наградăланă.

Йăлтах – туй пирки

Чăваш патшалăх ўнер музейёнче «Халăх туйё – художник куçёпе. Символика, йăла-йёрке, сăнарсем, хальхи самана» выставка йёркеленё. Унăн тёп тёллевё – халăх еткерне упрасси, хальхи ўнер искусствинче картина темине уçса парас йăла-йёркене аталантарасси.

Экспозицире – живопиç, графика, скульптура, декораципе хушма искусство ёçёсем, сăн ўкерчёксем. Курава чылай художник ёçне тăратнă. Вёсенчен паллăраххисем – И.Дмитриев, Ю.Зайцев, Н.Сверчков, М.Спиридонов, Н.Овчинников, А.Миттов, П.Сизов. Экспозицин тёп темисем – сăрă ăстисем тата туй; туй – халăх ўнер пултарулăхёнче; туй япалисен тёнчи. Выставкăна Чăваш патшалăх ўнер музейён директорё Геннадий Козлов уçнă. Культура министерствин тёп специалисчё Анастасия Григорьева пухăннисене хăйне евёр курав уçлнă ятпа саламланă.

А.ГРОМОВА.

Универсиадăра – Татьяна Семенова

Раштавăн 11-мёшёнче Италире Пётём тёнчери студентсен хёллехи Универсиади пуçланать. Унта çёр-шывăн пёрлештернё команди те хутшăнать, вёсен йышёнче Чăваш Ен спортсменё те пур.

Студентсен ăмăртăвёнче республика чысне РФ спорт мастерё Татьяна Семенова хўтёлё. Маттур биатлонçа Ханты-Мансире иртнё Пётём Раççейри турнирта спринтерсен тупăшăвёнче виççёмёш вырăна тухса Универсиадăна кайма тивёçнё. Шупашкарти Олимп резервёсен ятарлă 2-мёш спорт шкулёнче Анатолий Акимов патёнче ăсталăха туптаканскер кăçал пысăк çитёнўсемпе пёрре мар савăнтарнă. Вăл федерацин Атăлçи округён чемпионатёнче ылтăнпа бронза медальсем çёнсе илнё, биатлонистсен çуллахи чемпионатёнче иккёмёш кăтартупа палăрнă.

А.МИХАЙЛОВ.

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШЁ

МЕЧЁК ХĂВАЛАНИПЕХ ЧЕМПИОН ÇИТЁНЕЙМЁ

Физкультура урокёсем... Мёнпе асра юлнă-ха вёсем? Хёлле йёлтёрпе чупнă, çулла футбол уйёнче мечёк хăваланă е тёрлё хускану туса ўтпёве çирёплетнё... Волейболла тата теннисла выляс килетчё, коньки çине тăма вёренес шухăш пурччё. Анчах мечёкпе ракетка сайра хутра алла лекетчё, пăр çинче те ярăнма хăнăхаймарăмăр.

Кашни урокра норматив кăтартăвёсене пурнăçлама ыйтатчёç те – 100 метрлă дистанцие миçе çеккунтра чупса тухасси, турник çинче миçе хут туртăнасси, тата ытти çинчен шухăшланипе дзюдо, маунтинбайк, фристайл евёр спорт енёсем пурри пирки илтмен те. Иртнё ёмёрён 90-мёш çулёсенче спорт хыпарёсене паянхи пек кашни утăмра пёлтерместчёç. Хальхи вăхăтра спорт каналёсем ёçлеççё, хаçат-журнал йышлă, радио кунён-çёрён янăрать, Интернет – вёсем урлă хальхи çамрăксем спортăн пётём кун-çулёпе паллашма, ăмăртусене тўрё эфирпа сăнама пултараççё.

Мёншён пуçартăм-ха çак калаçăва? Чылай шкулти физкультура урокёсем çўлерех асăннă йёркепе кăна иртеççё. Кашни занятире мечёк хăваланипе е урана йёлтёр сырса чупнипе кăна спортпа туслисен йышё пысăкланать-ши? Калăпăр, ачасене биатлонпа фристайлăн хăйне евёрлёхёсемпе паллаштарма, конькипе ярăнма хăнăхтарма, маунтинбайкпа тата спорт ориентировкипе кăсăклантарма мён чăрмантарать? Спорт хатёрёсем çук тейё хăшё-пёри. Анчах хăвăрт утма, каратэ мелёсене вёрентмешкён мён кирлё-ши? Уроксенче паллă спортсменсем, вёсен çитёнёвёсем çинчен пёлни те вырăнлă. Чăваш Енён спорт кун-çулё те вёренекенсемшён кăсăклă пулё. Олимп вăйийисен паттăрёсене вара кашнин пёлмелле. Шкулта вёрентмеççё теме хăюлăх çитеймё – аттестат илмешкён физкультурăпа экзамен тытмалла. Ун йёркипе килёшўллё билетри пёрремёш ыйту теори пайё.

Лаша пуласси тихаран, çын пуласси ачаран паллă. Чăн та, ача мён курса ўсет, çавна хăнăхать. Унран еплерех çын çитёнесси, паллах, ашшё-амăшёпе учительсенчен нумай килет. Çавăнпа вёсене сывă пурнăç йёркине пăхăнма вёрентмелле, спортпа та пёчёклех туслаштармалла. Хăйсем тёслёх вырăнёнче пулни вара питё пёлтерёшлё. Калăпăр, физкультура урокёсенче вёрентекен нихăçан та ачасемпе пёрле йёлтёр çине тăнине ас тумастăп. Темле ăста та пултаруллă пулин те яланах унăн ертсе пымалла. Çапах педагогсен йышёнче те ятлисумли сахал мар. Акă Куславкка районёнчи пёр шкулта А.Самсонова пурччё. Хăйён ёçне юратаканскер ачасене илёртме пёлетчё, спорта явăçтаратчё. Вёсене часчас тёрлё ăмăртăва илсе çўретчё, хăй те тупăшусене хутшăнатчё. Вăл тăрăшнипех çамрăксен спортри кăтартăвёсем ўсрёç.

Паллах, физкультура урокёсен хальхи вёренў тытăмё япăх теймён. Темиçе çул каялла физкультура урокёсен йышне ўстерни спортăн тёрлё тёсне аталанма май пачё. Тёслёхрен, ишесси. Кашни районта ФСК ёçленёрен ачасем хёлён-çёвён бассейна çўресе ишев ăсталăхне вёренеççё. Учительсем палăртнă тăрăх – ачасем çак уроксене уйрăмах килёштереççё. Çавăнпах пулё юлашки çулсенче ку енёпе чылай ăмăрту йёркелеме тытăнчёç. «Ишекен шкул» тата «Эпё ишме пёлетёп» проектсем те пысăк витём кўреççё.

Çамрăк ăрăва спортпа туслаштарас тата сывă пурнăç йёркине хăнăхтарас ёçре уроксем кăна мар, класс тулашёнчи мероприятисем питё пёлтерёшлё. Спорт секцийё кашни шкултах пур, анчах вёсен шайё тёрлёрен. Чылай чухне вёренекенсем çăмăл атлетика, сётелçи теннис, шашка-шахмат секцийёсенче ăсталăха туптаççё. Хăш-пёр пёлў çуртёнче районти спорт шкулёсен филиалёсене уçнă. Вёсем пулăшаççё те ёнтё пулас спортсменсене çитёнтерме. Тёслёхрен, Елчёкпе Куславкка кире пуканне йăтакансемпе паллă, Патăрьелсемпе Канашсем велосипедçăсемпе чапа тухнă. Вăрмар районёнчи Пысăк Енккасси вăтам шкулё çёршывёпе палăрнă атлетсене ўстернё.

Элёк районёнчи Мăн Вылăсем пёр тăван Семеновсемпе мухтанаççё. Хăвăрт утас енёпе тёнчипе палăрнă тренерсем шкулта вёреннё чухне кунашкал спорт тёсё пуррине пёлмен те, вёсем тăрăшнипе кăна аталанчё вăл. РФ физкультурăн тава тивёçлё ёçченё Виктор Семенов халё Элёк районёнче хăвăрт утакансен шкулне чёртсе тăратас енёпе вăй хурать. Ун патёнче вун-вун ача ăсталăха туптать. Семеновсем пек хастар та пултаруллă вёрентекенсем яш-кёрёмпе хёрупраç спорт çулё çине тăччăр тесе нумай тăрăшаççё. Анчах вёсен те пурнăçё пыл та çу мар. Тёрлё мероприятире пулнă май тренерсем ăмăртусене тухса çўреме укçатенкё çитменнине, транспорт тупма хён пулнине палăртаççё, çав сăлтавпах турнирсене кайманни те пёрре мар пулнă иккен.

Çак кунсенче Етёрне районёнчи Пушкăрт шкулёнче пулма тўр килчё, унта физкультура учителёпе Татьяна Ванюшевăпа курса каласрăм. Вăл каланă тăрăх – ачасем футболла, баскетболла, волейболла выляма юратаççё, хёлле йёлтёр çине тăраççё. Юлашки çулсенче вёренекенсем бассейна çўреме тытăннă, аэробикăпа тата гимнастикăпа кăсăклана çççё. Нумай çул вёренў учрежденийёнче сётелçи теннис секцийё ёçлет. Кашни ир зарядкăна тухасси йăлана кёнё. Сывă пурнăç йёркине тытса пыма шкулта май çителёклех пулин те спортпа туслашас текен йышланманнине те палăртрё учитель. Чăн та, тата мёнпе илёртмелле-ши вёсене?

■ Андрей МИХАЙЛОВ

Çанталăк çинчен

Паян ăмăр çанталăк пулать. Çил çурçёр-хёвел анăçёнчен çеккунтра 4 метр хăвăртлăхпа вёрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 12, каçхине 13 градус сивё.** Атмосфера пусăмё 749 мм, сывлăшри нўрёк 84 процент.

Кун тăршшё 7 сехет те 4 минут.

Ыран пёлётлё çанталăк, юр çăвать. Çил çурçёр-хёвел анăçёнчен çеккунтра 3 метр хăвăртлăхпа вёрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 13, каçхине 16 градус сивё.** Атмосфера пусăмё 759 мм, сывлăшри нўрёк 84 процент.

Кун тăршшё 7 сехет те 3 минут.

Пулăм

«Çăлтăр ушкăнĕ» шăпăрлансене йышăнчĕ

ЧР ПА пресс-службин сăн ӳкерчĕкĕсем

Шупашкарти Миттов урамĕнче вырнаçнă 7-мĕш ача сачĕн картишĕнче лăс туратлă чăрăш лартнă та – ситĕннисемпе вĕттисем хаваслă картана тăнă. Çĕнĕ çул умĕнхи çĕкленӳллĕ туйăм мĕншĕн ытла ир вăраннă тетĕр-и? Савăнăçĕ капашсăр пысăк: капмар та хитре çак çурта çулталăкри чи юратнă уяв умĕн хута ярассишĕн строительсем çав тери тăрăшнă, палăртнине пурнăçа кĕртнĕ.

«Çăлтăр ушкăнĕ» /ячĕ, чăн та, вырăсла – «Созвездие», тăван чĕлхемĕр ют тенĕ-ши?/ ача сачĕн никĕсне 2012 çулхи чӳк уйăхĕнче хывнă. Хулан Кăнтăр-хĕвел анăç районĕнче хута кайнăскер иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнчи учрежденисенчен чылай уйрăлса тăрать. Чи пĕлтерĕшли – кунта инвалид ачасене те йышăнма пултараççĕ. Вĕсене валли çурта кĕме – пандус, иккĕмĕш хута хăпарма лифт пур. Интерактив залĕ, çавăн пекех – лекотека, сенсор пӳлĕмĕ, физиотерапи пӳлĕмĕллĕ медицина блокĕ, бассейн, хальхи йышши оборудовани лартнă апат-çимĕç блокĕ, изостуди, этнографи пӳлĕмĕ... Строительствăна пуçарнă чухнехи планпа палăртнă 240 вырăнлăх садикре паян 360 пепкене вырнаçтарма май килнĕ. Çакă, Наталья Спиридонова заведующи ĕнентернĕ тăрăх, ачасене сиенлĕ витĕм кӳмелле мар: лаптăксем пысăкки хушма вырăнсем уçма май панă.

Раштавăн 6-мĕшĕнче шкулченхи вĕренĕвĕн çĕнĕ заведенине уçма сумлă йыш килсе çитрĕ: Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов, тĕп хулан администраци пуçлăхĕ Леонид Черкесов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «Пĕрлехи Раççей» партин регионти уйрăмĕн секретарĕ Николай Малов. Хĕрлĕ хăйăва ачасемпе пĕрле касиччен Михаил Васильевич республикăра Раççей Президенчĕн «Вĕренӳпе ăслăлăх тытăмĕнче патшалăх политикине пурнăçа кĕртмелли мерăсем çинчен» Указĕпе килĕшӳллĕн чылай ырă улшăну пулнине палăртрĕ. Кăçал кăна Чăваш Енре шкул çулне çитменнисем валли 11 çĕнĕ объект çĕклеме палăртнă. /Вĕсенчен 9-шĕ хута кайрĕç ĕнтĕ/. «Ашшĕ-амăшĕ ĕçе шанчăклăнах кайма пултартăр тесен ачан тивĕçлĕ тимлĕх çителĕклĕ вырăнта юлмалла. Çĕнĕ садике çӳреме пуçланă пепкен ашшĕ-амăшне ăмсанатăп: хăтлă та илемлĕ çуртра ача аталанăвĕ валли майсем чылай. Калăпăр, кунта ют чĕлхесене те вĕрентесшĕн. Çавăнпах вĕсен хушшинче çĕршыва аталантармашкăн ăнтăлакан тата пултаракан ачасем çитĕнесси иккĕлентермест», – уява пухăннисен куçĕнче савăнăç палăрнине курса хăпартланчĕ Республика Пуçлăхĕ.

■ **Ирина ИВАНОВА**

Канашлу

Асăрханăр: ачасем

Çак кунсенче федерацин Чăваш Республикинчи тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров ачасене транспортпа ăçта та пулин илсе кайнă чухне хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессин ыйтăвĕпе канашлу ирттернĕ.

«РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич тĕллев лартнă: ĕç тăвакан влаçăн регионри органĕсемпе пĕрле ачасен çул çӳрев хăрушсăрлăхне йĕркелемелли тытăма хатĕрлемелле, çулйĕрпе патруль службине хурала ярасси таранах», – тенĕ Геннадий Федоров сӳтсе явакан ыйту çивĕчлĕхне палăртса.

ЧР ШЕМĔН ÇÇХПИ управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ Геннадий Чурбанов вĕренӳ заведенийĕсем ачасене транспортпа ăçта та пулин илсе каяссине патшалăх автоинспекцийĕн ĕçченĕсене хушăран вăхăтра /10 кун маларах/ пĕлтерменнине каланă. Ку вара маршрута тĕрĕслесе тăрас ĕçе тата автобуссемпе пĕрле çулйĕрпе патруль службин ятарлă транспортне ярас ыйтăва татса парассине кăткăслатать.

Шкул автобусĕсене – пĕтĕмпе 329 – пурне те спутник навигацийĕн /ГЛОНАСС/ аппаратурипе тивĕçтернĕ, вĕсене тĕрĕслевĕн диспетчер пункчĕсемпе çыхăнтарнă. Çакнашкал пункт нумайăн мониторинг ирттерес тата васкавлă йышăну тăвас ĕçре йывăрлăхсем кăларса тăратать. Автобуссем ăçта кайнине тĕрĕслемелли пĕрлехи диспетчер пунктне туса хурсан ку ыйтăва татса пама май килĕччĕ.

ЧР вĕренӳ министрĕн çумĕ Сергей Кудряшов шкул автобусĕсен паркне çĕнĕтесси çинче чарăнса тăнă. Хальхи вăхăтра вĕсен 76,6% хăрушсăрлăх йĕркине тивĕçтерет. 2002-2004 çулсенче кăларнă автобуссене пурне те улăштарнă. Республикăна 2006 çулта илсе килнисене «çĕнетме» пуçланă.

Канашлу вăхăтĕнче вĕренӳ заведенийĕсенче çул-йĕр правилисене «шĕкĕлчессин» тата çул çинчи инкексен профилактикин ыйтăвĕсене çĕкленĕ. Çавăн пекех урамсене çителĕксĕр çутатнипе тата йĕркеллĕ тротуарсем çуккипе çыхăннă ситменлĕхсене сӳтсе явнă. Геннадий Федоров хĕллехи тапхăрта çулсен тăрăмĕ янăхланнине, çавна май тимлĕхе ӳстермеллине, Çĕнĕ çулпа çыхăннă мероприятисен вăхăтĕнче те çул çинчи хăрушсăрлăх пирки манмалла маррине аса илтернĕ.

■ **И.БЕЛОВА**

Тăрă шыв çине

Депутат суяпа инçе каясшăн

Республика çитес çула çирĕплетнĕ бюджетпа кĕрет. Влаçсем йывăрлăхсем пуррине пытармаççĕ пулин те пайăрăн палăртаççĕ: 2014 çул бюджечĕ – социаллă тĕллевлĕскер. Урăхла каласан – çивĕчлĕхе пăхмасăр социаллă ыйтусене татса парассине тĕпе хунă. Çав шутра – вĕрентӳ, культура объекчĕсене хута ярасси тата ыт.те. Анчах хăшĕсене çакă та килĕшмест пулас. Мĕн тăван, хурласси – вĕсем суйласа илнĕ çул...

Хăш-пĕр сăнавçă çакăнта вĕсем республика Пуçлăхĕн суйлавне хатĕрленме пуçланине те курать. Çăлтавсăр та мар. «Тĕрĕслĕхшĕн тăракан Раççей» партин вырăнти представителĕсем хăйсен хаçатне авă мĕнешкел тиражпа сарма пуçларĕç. Тӳлевсĕр. «Укçи ăçтан?» – тесе ыйтма пулатчĕ пуль те, анчах ют кĕсьери укçана шутлама хушмаççĕ вĕт – чăкăлташар мар. Сăмах урăхи пирки пулнине шута илсен – пушшех.

Сăмах вара асăннă партин Чăваш Ен парламентĕнчи фракцийĕн лидерĕн ăмсанмалла хастарлăхĕ пирки. Игорь Моляков Патшалăх Канашĕн иртнĕ сессийĕнче каллех питех те хастар пулчĕ. Вăл кашнинчех шăв-шав çĕкленине хăнăхнă-ха, хальхинче хăйĕн ĕçтешнех тапăнчĕ – ПК депутатне, «ТУС» строительство фирмин гендиректорне, нумаях пулмасть Чăваш наци конгресĕн президентне суйланнă Николай Угаслова.

Игорь Юрьевич пĕлтернĕ тăрăх – «ТУС» компани валли влаçсем икĕ вăрман лаптăкне резервланă имĕш. Çав лаптăксене аукциона кăларнă пулсан бюджета пысăк тупăш кĕмеллеччĕ... Юрать-ха, Угаслов хăй те кунтах – тӳрех хуравларĕ. Унсăрăн тĕрĕс мар информаци сарăлатчĕ вĕт – усал хыпар утпа çӳрет тенĕн... Лаптăксене резервлани тĕлĕшпе эсир тĕлĕк тĕлленнĕ пуль тесе Николай Федорович сас-хурана татăклăн сирчĕ: «ТУС» компание йывăç тирпейлемелли инвестици проектне пурнăçлама сĕннĕ – акă мĕн пирки каласу. Анчах фирма çак ĕçе пуçăнас тĕлĕшпе йышăну туман-ха – «эпĕ нимĕн те татса паман, шухăшлатăп...»

Моляков Угаслов тĕлĕшпе мĕншĕн иккĕленӳ çуратас тенине тавçăрма йывăр мар. «ТУС» юлашки çулсенче республика ертӳçисемпе аллааллăн ĕçлет, тачă çыхăну кăтартăвĕ куç кĕрет. Компани Шупашкарта пурăнмалли пысăк микрорайон çĕклерĕ, ку енĕпе малалла ĕçлет, кăçал Красноармейски районĕнче çĕнĕ кирпĕч завочĕ хута ячĕ – çĕр-çĕр çын ĕçлĕ, хыснана налук кĕрет. Ăна хурласан республика ертӳçисем те ăпăх ĕçленĕ пек кăтартма пулать вĕт. Статья пуçламăшĕнче палăртнă тĕлleве пурнăçлассипе питĕ çыхăнуллă... Апла пулман тăк хисеплĕ депутатăн республикăн хальхи ертӳçисем çĕр çаврăнăшĕ, çут çанталăк пуянлăхĕпе усă курас тĕлĕшпе йĕрке тума ăнтăлнине те йышăнма тиветчĕ. Мĕн пытармалли, унччен илĕртӳллĕ лаптăксем «çывăх» çынсен харпăрлăхне куçнă тĕслĕхсем те пайтах пулнă, çут çанталăк пуянлăхĕпе усă курнăшăн хывакан тӳлев виçи кăна пĕлтĕр 2008 тата 2009 çулсенчи кăтартуран ултă теçетке хут пысăкланнă. Çак укçа бюджета кĕнĕ...

«ТУС» пирки хурласа калаçмашкăн чĕлхе çаврăнни тĕлĕнтерет те, тарăхтарать те. Çак компани хыснана çулталăкне 100 млн тенкĕ таран налук тӳлет – тата мĕн кирлĕ? Чăвашсем «хăвна пĕл!» теççĕ. Хисеплĕ Игорь Юрьевичăн хăйне пĕлесчĕ. Налук тенĕрен, халĕччен хыснана пĕр пус хывманскерĕн кăштах вăтанмалла пек ĕнтĕ. Кирек мĕнле пулсан та вăл депутата суйланнă май тăратнă декларацисенче, ас тунă тăрăх, тупăш графинче нульсем кăначчĕ. Чăн та, халĕ вăл та бюджета пуянлатать-тĕр. Патшалăх Канашĕн Патшалăх строительстви, вырăнти хăй тытăмлăх, регламент тата депутат этики енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕн çумĕ вĕт – оклачĕ сумлă. Сас-хура тăрăх – 70-80 пин тенкĕ таранах. Чăн та, депутатсем хăйсен шалăвĕ пирки шавласах каймаççĕ те – чăннипех çавăн чухлĕ тесе çирĕплетме тăхтăпăр.

...Шӳтлекенсем те пур ĕнтĕ: «Федоров Молякова тĕрмене хуптарнă, халь вара пысăк шалу тӳлеççĕ, награда параççĕ». Ахаль-махаль кăна депутат кăна пулнă тăк – каçарма та юратчĕ пуль, анчах сумлă должноç явапăха туйма системелле пек. Çук, апла мар иккен. Интереслĕ, парламент трибунипе тĕрĕс мар информаци сарма усă курни хайхи депутат этикипе мĕнлерех килĕшсе тăрать-ши? Тен, парламентарисен çак ыйтăва та хуравламалла? Тепĕр тесен – ĕçтешĕсем Игорь Юрьевичăн улшăнчăк кăмăлĕ-позицине хăнăхнă та ĕнтĕ. Ахальтен мар иртнĕ сессире Молякова çаплах каларĕç: Патшалăх Канашĕнче нумай çул ĕçленĕ май эсир коммунистсен фракцийĕнче те пулнă, халь – эсерсен ретĕнче, вăхăт пур-ха – «Пĕрлехлĕ Раççее» куçăр.

Хайхи улшăнчăклăх Моляков çĕклекен темăсенче те куç кĕрет палăрать. Хай вăхăтĕнче вăл, ас тăватпăр, «Çĕнĕ хула» строительствине питĕ хирĕçчĕ, çакна унта çынсене чир ерес хăрушлăх пуррипе çăлтавлатчĕ. Республика бюджетĕнчен унти çуртйĕрам строительстви валли укçа уйăрмалла мар! Халь пачах урăхла çаптарать: проект пысăк пĕлтерĕшлĕ-мĕн, строительство ĕçĕсен хăвартлăхĕ ăна тивĕçтермест иккен.

«Çĕнĕ хулана» камсем пуçласа шурлăха кĕртсе ӳкерни асра та çук! Чăваш Енĕн ун чухнехи влаçĕсем ирĕк панипе иртĕхнĕ «Савва» компанисен ушкăнĕнчи çынсем республикăра пурăнакансен ырлăхĕшĕн мар, укçашăн çуннине пула чарăнса ларнă строительствăна çĕнĕрен чĕртесси Чăваш Енĕн паянхи ертӳçисемшĕн мĕнлерех йывăр пулнине тавçăрма пулать. Депутат та суккăр мар – вăл та çакна питĕ лайăх ăнланать-тĕр. Анчах темшĕн курмăш тăвать. «Çĕнĕ хула» тенĕрен – хыт-хура хупăрлама ĕлкĕрнĕ лаптăкра строительство ĕçĕсем чăннипех тепĕр хут вăй илчĕç. Кăçал унта пурăнмалли нумай хутлă ултă çурт хута яма палăртнă – 16,5 пин тăваткал метра яхăн. Халĕ хамăрăн компанисем ĕçлеççĕ – «Иско-Ч», «Инкост» АУОсем, «Монолит строительстви» ООО. Вĕсене шанма пулать. Молякова вара...

■ **К.АНТОНОВ**

Чăваш Республикин САККУНĔ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНВЕСТИЦИ ФОНЧĔ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 2013 çулхи чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕнче йышăннă

1 статья. **Çак Саккун йĕркелекен ыйтусем**

Çак Саккун Чăваш Республикин Инвестици фончĕн бюджет укçи-тенкине пухас тата унпа усă курас ĕçпе çыхăннă хутшăнусене йĕркелет.

2 статья. **Чăваш Республикин Инвестици фончĕ ăнлав**

Чăваш Республикин Инвестици фончĕ /малалла – Фонд/ – Чăваш Республикин территорийĕнче патшалăхпа уйрăм çын ĕçтешлĕхĕн йĕркипе пурнăçлакан инвестици проекчĕсене ĕçе кĕртес тĕллевпе усă курмалли Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенкин пайĕ.

3 статья. **Фондăн бюджет укçи-тенки**

1. Фондăн бюджет укçи-тенкин калăпăшне Чăваш Республикин Чăваш Республикин череттĕ финанс çулĕнчи тата планпа пăхнă тапхăрти республика бюджечĕ çинчен калакан саккунĕпе çирĕплетеççĕ.

2. Фондăн бюджет укçи-тенкине конкурс никĕсĕ çинче уйăрса параççĕ.

4 статья. **Фондăн бюджет укçи-тенкине пухасси тата унпа усă курасси**

1. Фонда йĕркелес ĕçе Чăваш Республикин республика бюджетне налукран кĕрекен тата налукпа çыхăнман укçа-тенкĕ шутĕнчен, çавăн пекех Чăваш Республикин республика бюджетне патшалăхпа уйрăм çын ĕçтешлĕхĕн йĕркипе пурнăçлакан инвестици проекчĕсене пурнăçлама уйăрса панă субсидисем шутĕнчен туса пыраççĕ.

2. Фондăн бюджет укçи-тенкине пухас тата унпа усă курас ĕç йĕркине Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ çирĕплетет.

3. Иртсе пыракан финанс çулĕнче тата планпа пăхнă тапхăрта Фондăн бюджет укçи-тенкине Фонд бюджечĕн отчетлă финанс çулĕнче усă курмасăр юлнă укçа-тенкĕ калăпăшĕ чухлĕ, çавăн пекех Фонд бюджечĕн укçи-тенки шутĕнчен вырăнти бюджетсене уйăрса панă, отчетлă финанс çулĕнче усă курмасăр юлнă субсидисене тавăрса панинчен Чăваш Республикин республика бюджетне кĕнĕ тупăшсен калăпăшĕ чухлĕ, Раççей Федерацийĕн Бюджет кодексĕн 242 статйин 5-мĕш пункчĕн положенийĕсене шута илсе, ӳстерсе пымалла.

5 статья. **Çак Саккун вăя кĕресси**

Çак Саккун 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.

Шупашкар, 2013, чӳк, 29, 87 №.

Чăваш Республикин САККУНĔ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ИНВЕСТИЦИ ĔÇ-ХĔЛНЕ ПАТШАЛĂХ ПУЛĂШАССИ ÇИНЧЕН» САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 2013 çулхи чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕнче йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче инвестици ĕç-хĕлне патшалăх пулăшасси çинчен» 2004 çулхи çу уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 8 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2004, 59, 61 №-сем; 2006, 70 №; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 75, 77 №-сем; 2009, 83 №; 2010, 87 №; 2011, 91 №; 2012, 92 № /I том/; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 6 №/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ 2 статьян вун пиллĕкмĕш абзацĕнче «тĕп планпа» сăмахсене «муниципаллă район территорине планламалли схемăпа /поселенин тĕп планĕпе, хула округĕн тĕп планĕпе/ килĕшӳллĕн» сăмахсемпе улăштарас;

2/ 3 статьян саккăрмĕш абзацне çакăн пек çырса хурас:

«Чăваш Республикин территорийĕнче пурнăçлакан Раççей Федерацийĕн патшалăх программисем, федерацин тĕллевлĕ программисем, Чăваш Республикин патшалăх программисем;»;

3/ 4 статьяра:

ятне çакăн пек çырса хурас:

«4 статья. Инвестици ĕç-хĕлне патшалăх пулăшасси»;

пĕрремĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

«1. Чăваш Республикинче инвестици ĕç-хĕлне патшалăх пулăшас тĕллевпе çакăн пек формăсемпе тата мелсемпе усă кураççĕ:»;

çиччĕмĕш абзаца «республикăн тĕллевлĕ программисене» сăмахсене «Чăваш Республикин патшалăх программисене /Чăваш Республикин патшалăх программисен çум программисене/» сăмахсемпе улăштарас;

çакăн пек çырса 2-мĕш пай хушса хурас:

«2. Çак инвесторсене инвестици ĕç-хĕлне пурнăçлама патшалăх пулăшăвĕ памаççĕ:

кредит организацийĕсем, страхлав организацийĕсем /потребитель кооперативĕсемсĕр пуçне/, инвестици фончĕсем, патшалăхăн мар пенси фончĕсем шутланакан, хаклă хутсен рынокĕнче професси шайĕнче ĕçлекен, ломбард тытакан инвесторсене;

продукцие пайласси çинчен тунă килĕшĕве хутшăнакан инвесторсене;

вăйă бизнесĕ енĕпе предприниматель ĕçне пурнăçлакан инвесторсене;

Раççей Федерацийĕн ют çĕр-шыв укçине йĕркелесе тата тĕрĕслесе тăрасси çинчен калакан саккунĕсемпе палăртнă йĕркепе Раççей Федерацийĕн резиденчĕсем шутланман инвесторсене, Раççей Федерацийĕн пĕтĕм тĕнчери договорсемпе пăхса хăварнă тĕслĕхсемсĕр пуçне.»;

4/ 7 статьян 3-мĕш пайне çакăн пек çырса абзацсем хушса хурас:

«инвестора Федерацин «Раççей Федерацийĕнче территорие аталантармалли зонăсем çинчен тата Раççей Федерацийĕн уйрăм саккунĕсен акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен» 2011 çулхи раштав уйăхĕн 3-мĕшĕнчи 392-ФЗ №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн территорине аталантармалли зона резиденчĕсен реестрне кĕртсен;

инвестора Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн нормативлă право акчĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин территорийĕнчи индустри паркĕсен резиденчĕсен реестрне кĕртсен.»;

5/ 8 статьяра:

1-мĕш пайра «бюджет инвестицийĕсем валли» сăмахсене «бюджет инвестицийĕсене пурнăçлама» сăмахсемпе улăштарас;

2-мĕш пайăн виççĕмĕш абзацне «Чăваш Республикин патшалăх нушисем» сăмахсем хыççăн «тата муниципалитет нушисем» сăмахсем хушса хурас;

3-мĕш пай хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

4-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

«4.Республикăн ятран паракан инвестици программине капиталлă строительство объекчĕсем, мероприятисем /пысăклатнă инвестици проекчĕсем/, куçман пурлăх объекчĕсем кĕреççĕ. Вĕсене тума, юсаса çĕнетме е техника тĕлĕшĕнчен пуянлатма тата /е/ туянма каякан Чăваш Республикин республика бюджечĕн бюджет укçи-тенкине Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Чăваш Республикин патшалăх программисене çирĕплетесси, Чăваш Республикин çирĕплетнĕ патшалăх программисене улшăнусем кĕртесси çинчен калакан нормативлă право акчĕсемпе палăртса хăвараççĕ.»;

6/ 10 статьян 5-мĕш пайĕнче:

иккĕмĕш абзаца «патшалăх гарантийĕ» сăмахсем хыççăн «/малалла çавăн пекех – инвестици проекчĕсене конкурс урлă суйласа илесси/» сăмахсем хушса хурас;

виççĕмĕш абзаца «пичетлесе кăлараççĕ» сăмах умĕн «полномочи панă орган» сăмахсем хушса хурас;

7/ 10^1 статьян 2-мĕш пайĕн улттăмĕш абзацĕнче «республикăн тĕллевлĕ программисемпе» сăмахсене «Чăваш Республикин патшалăх программисемпе» сăмахсемпе улăштарас, «районĕн /хулин/» сăмахсене «муниципалитет пĕрлĕхĕн» сăмахсемпе улăштарас;

8/ 10^2 статьяра:

2-мĕш пайăн улттăмĕш абзацне çакăн пек çырса хурас:

«Енчен те инвестици проекчĕсене патшалăх гарантийĕсем пама ирттерекен конкурс пулса ирттмен тесе йышăнсан, Инвестици политики енĕпе ĕçлекен канаш Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне инвестици проекчĕсене патшалăх гарантийĕсем пама ирттерекен конкурса пĕртен пĕр хутшăнакана патшалăх гарантине пама е полномочи панă органа инвестици проекчĕсене патшалăх гарантийĕсем пама ирттерекен конкурса тепĕр хут ирттерме хушма сĕнет.»;

3-мĕш пайра «пичетлемелле» сăмах умĕн «полномочи панă орган» сăмахсем хушса хурас;

5-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

«5. Патшалăх гарантине конкурс ирттермесĕр уйрăм тĕслĕхре кăна пама пултараççĕ, енчен те ăна çак парăмсен обязательствисене пурнăçлассине тивĕçтерес тĕллевпе параççĕ пулсан:

1/ юридически сăпатсен Раççей Федерацийĕн тата пĕтĕм тĕнчери финанс организацийĕсен умĕнчи парăм обязательствисене;

2/ Чăваш Республикин муниципалитет пĕрлĕхĕсен виççĕмĕш сăпатсен умĕнчи парăм обязательствисене;

3/ юридически сăпатсен кредит организацийĕсен умĕнчи çакна пула пулакан парăм обязательствисене:

патшалăх гарантийĕсемпе тивĕçтернĕ обязательствăсем енĕпе парăма куçарнипе;

патшалăх гарантийĕсемпе тивĕçтернĕ маларах тунă кредит договорĕсем тăрăх парăмсене парса татма кредитсем явăçтарнипе;

патшалăх гарантийĕсемпе тивĕçтернĕ кредит договорĕсем вăйра тăмалли вăхăта тăснипе.»;

9/ 10^6 статьяра:

пĕрремĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

«Енчен те патшалăх гарантине инвесторăн кредит организацийĕ умĕнчи малашне Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенки шучĕпе парса татма палăртакан парăм обязательствисене пурнăçлассине тивĕçтерес тĕллевпе параççĕ пулсан /инвесторăн тĕп парăмĕн укçи-тенкине тата кредит параканăн проценчĕсене шута илсе/, кредит организацине, çак Саккунăн 10^2 статйин 5-мĕш пайĕне пăхса хăварнă тĕслĕхсемсĕр пуçне, уçă конкурс ирттерсе çеç суйласа илеççĕ.»;

виççĕмĕш абзаца «çичĕ ĕç кунĕ» сăмахсене «календарлă вăтăр кун» сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

1. Çак Саккун, çак статьяпа урăх вăхăтра вăя кĕртме палăртнă положенисемсĕр пуçне, ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

2. Çак Саккунăн 1 статйин 2-мĕш пункчĕ, 3-мĕш пункчĕн улттăмĕш абзацĕ, 4-мĕш пункчĕн виççĕмĕш абзацĕ, 5-мĕш пункчĕн пиллĕкмĕш тата улттăмĕш абзацĕсем, 7-мĕш пункчĕ 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕреççĕ.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.

Шупашкар, 2013, чӳк, 29, 88 №.

Чăваш Республикин САККУНĔ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ГРАЖДАНСЕНЕ ФЕДЕРАЦИН «ВЕТЕРАНСЕМ ÇИНЧЕН» ТАТА «РАССЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔНЧЕ ИНВАЛИДСЕНЕ СОЦИАЛЛĂ ХЎТЛĔХ ПАРАССИ ÇИНЧЕН» САККУНĔСЕМПЕ КИЛĔШЎЛЛĔН ПУРĂНМАЛЛИ ÇУРТ-ЙĔРПЕ ТИВĔÇТЕРЕС ЕНĔПЕ 2014 ÇУЛТА СОЦИАЛЛĂ ПУЛĂШУ ПАМАЛЛИ ЙĔРКЕ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 2013 çулхи чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕнче йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин «Кил-çурт хутшăнăвĕсене йĕркелесси çинчен» 2005 çулхи юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикинче Федерацин «Ветерансем çинчен» 1995 çулхи кăрлач уйăхĕн 12-мĕшĕнчи 5-ФЗ №-лĕ саккунĕн 14, 16 тата 21 статйисенче тата Федерацин «Раççей Федерацийĕнче инвалидсене социаллă хўтлĕх парасси çинчен» 1995 çулхи чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 181-ФЗ №-лĕ саккунĕн 17 статйинче кăтартнă, пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсем тĕлĕшĕнчен хĕсĕк пурăнакан тата 2005 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕччен учета тăнă граждансене тата Федерацин «Ветерансем çинчен» 1995 çулхи кăрлач уйăхĕн 12-мĕшĕнчи 5-ФЗ №-лĕ саккунĕн 14, 15, 17–19 тата 21 статйисенче кăтартнă, пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсем тĕлĕшĕнчен хĕсĕк пурăнакан граждансене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерес енĕпе 2014 çулта социаллă пулăшу памалли йĕркене палăртас – пурăнмалли çурт-йĕр тума е туянма пĕр хутчен паракан укçа-тенкĕ тўлевĕсем уйăрас.

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.

Шупашкар, 2013, раштав, 2, 89 №.

Чăваш Республикин САККУНĔ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ÇУТ ÇАНТАЛĂКПА УСĂ КУРАССИ ÇИНЧЕН» САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 2013 çулхи чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕнче йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче çут çанталăкпа усă курасси çинчен» 1999 çулхи чӳк уйăхĕн 10-мĕшĕнчи 17 №-лĕ саккунне /Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 1999, 32 №; 2002, 46 №; 2003, 53, 57 №-сем; 2004, 61 №; 2005, 65 №; 2006, 71 №; 2007, 73 №; 2008, 78 №; 2009, 80 №; 2010, 84, 86 №-сем; 2011, 90 №; 2012, 92 № /I том/; «Республика» хаçат, 2012, раштав уйăхĕн 7-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7 №/ çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1/ 9 статьян виççĕмĕш абзацĕ хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

2/ 10 статьяра:

улттăмĕш абзаца «республикăн тĕллевлĕ программисене» сăмахсене «Чăваш Республикин патшалăх программисене /Чăваш Республикин патшалăх программисен çум программисене/» сăмахсемпе улăштарас;

«а» пунктăн саккăрмĕш абзацĕ хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

«д» пунктра:

çиччĕмĕш абзац хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

çакăн пек çырса абзацсем хушса хурас:

«çĕр айĕнчи анлă сарăлнă пуянлăхсене кăларнă чухне пулакан çухатусен нормативĕсене /технологи тĕлĕшĕнчен вĕсем йышăннă схемăпа тата çĕр айĕнчи пуянлăх вырăнĕпе усă курмалли технологипе çыхăнса тăраççĕ, хăйсен виçипе проект документацийĕн йышĕнче çирĕплетнĕ нормативсенчен пысăкрах пулаççĕ/ килĕштермелли йĕркене палăртасси;

патшалăх балансĕнче шутланман çĕр айĕнчи анлă сарăлнă пуянлăхсене кăлармалли тата çĕр лаптăкĕсен хуçисен, çĕрпе усă кураканнисен, çĕр хуçисен тата çĕр лаптăкĕсен арендаторĕсен нушисем валли çĕр айĕнче пилĕк метр таран тарăнăшра сооруженисем тумалли, çавăн пекех Чăваш Республикин территорийĕнче централизациленĕ йĕркепе шыв парса тăмалли çăл куç шутланман пĕрремĕш шыв сийĕнче йăлара усă курмалли çăлсем тата скважинăсем тумалли тата усă курмалли йĕркене палăртасси;»;

«ĕ» пунктăн иккĕмĕш абзацĕнче «енĕпе атмосфера сывлăшне сыхламалли республикăн тĕллевлĕ программисене тата атмосфера сывлăшне сыхлас енĕпе республика программисене» сăмахсене «енĕпе Чăваш Республикин патшалăх программисене /Чăваш Республикин патшалăх программисен çум программисене/» сăмахсемпе улăштарас;

3/ 11^1 статьяра:

«а» пунктра:

иккĕмĕш абзацра «республика программисене» сăмахсене «Чăваш Республикин патшалăх программисене /Чăваш Республикин патшалăх программисен çум программисене/» сăмахсемпе улăштарас;

çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

«ĕçме, хуçалăхпа йăла тĕллевĕсем валли шывпа тивĕçтерме тата сывату тĕллевĕсемпе усă куракан шыв объекчĕсен санитари сыхлавĕн округĕсемпе зонисен проекчĕсене çирĕплетесси тата ĕçме тата хуçалăхпа йăла тĕллевĕсем валли усă куракан çăл куçсен санитари сыхлавĕн зонисен чиккисене тата режимне палăртасси;»;

«д» пунктра:

виççĕмĕш абзаца «туса хатĕрлесси» сăмахсем хыççăн «тата тытса пырасси» сăмахсем хушса хурас;

тăхăрмĕш абзаца «, вĕсемпе усă курасси, Чăваш Республикин компетенцине кĕрекен» сăмахсене «вырăн пĕлтерĕшлĕ» сăмахсемпе улăштарас;

çирĕм иккĕмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

«çĕр айĕнчи анлă сарăлнă пуянлăхсене кăларнă чухне пулакан çухатусен нормативĕсене /технологи тĕлĕшĕнчен вĕсем йышăннă схемăпа тата çĕр айĕнчи пуянлăх вырăнĕпе усă курмалли технологипе çыхăнса тăраççĕ, хăйсен виçипе проект документацийĕн йышĕнче çирĕплетнĕ нормативсенчен пысăкрах пулаççĕ/ килĕштересси;»;

çакăн пек çырса абзацсем хушса хурас:

«çĕр айĕнчи анлă сарăлнă пуянлăхсене кăларнă чухне пулакан çухатусен нормативĕсене /технологи тĕлĕшĕнчен вĕсем йышăннă схемăпа тата çĕр айĕнчи пуянлăх вырăнĕпе усă курмалли технологипе çыхăнса тăраççĕ, хăйсен виçипе проект документацийĕн йышĕнче çирĕплетнĕ нормативсенчен пысăкрах пулаççĕ/ килĕштересси усă курассипе çыхăнăп ĕçсене пурнăçлама тунă ытти проект документацине килĕштересси;

çĕр айĕнчи анлă сарăлнă пуянлăхсем упранакан вырăна уçнă факта çирĕплетес енĕпе ĕçлекен комисси туса хурасси;

вырăн пĕлтерĕшлĕ çĕр айĕнчи пуянлăхсен лаптăкĕсемпе усă курнăшăн тăтăш тўлемелли тўлев ставкин конкретлă виçине палăртасси;»;

«ё» пунктра:

иккĕмĕш абзацра «атмосфера сывлăшне сыхлас енĕпе йышăнакан республикăн тĕллевлĕ программисене тата атмосфера сывлăшне сыхлас ен

Хушма кăларăм Хӳтлӗх

Кун-çул

Çемйипех кăмăлласа вулаççё

«Чăваш пичечӗн» салари киоскӗнче тăрăшакан Маргарита Филимонова пӗлтернӗ тăрăх – чăваш халăх хаçатне юратса вулакансем Тăвайӗнче йышлă. Вӗсенчен пӗри – Антонина Димитриева. Чылай çул ӗнтӗ вăл «Хыпара» куллен кунтан илсе тăрать. Çемйипех кăмăлласа вулаççё ăна, ерçӳ çук чухне те юратнă кăларăма алла тытмашкăн вăхăт тупаççё.

● *Антонина Димитриева.*

Чăн та, Антонина Виталиевнăн пушă самант çук та темелле: кил хуçалăхё пысăк, картиш тулли – кайăк-кӗшӗк, вылăхчӗрлӗх. Унсăр пуçне вăл ӗçлеме пăрахман-ха: районти тӗп больницăра хирурги уйрăмӗнче тăрăшать: вун виçё çул – сурана тасатса çыхнă çӗрте, халё – операци сестринче. Пӗтӗмӗшле стажё 33 çултан иртнё, çав шутра 31-шӗ сывлăх сыхлавӗпе çыхăннă. Кăçалхи нарăс уйăхёнче вăл пенсие тухрё. Пӗрремӗш категори специалисчё хальлӗхе тивӗçлё кану пирки шухăшламасть. Ăсталăхёпе явапланăё пысăк унăн, тăрăшулăхё иксӗлми. Çак пахалăхсене ертӳçёсем уйрăмах хакласçё.

Хăй те ӗçпе кăмăллă. Коллективра пӗр çемьери пек туслă пурăнаççё. Николай Димитриев хирурга ыррипе палăртать медицина сестри, йыш çамрăкланса пынишӗн савăнать – кăçалхи çурла уйăхёнче çамрăк тухтăр Владимир Гурьев сиплеве кӳлённё. Ёçтешёпе Елена Саперовăпа та пӗр чӗлхе тупнă.

«Эпир хамăр ӗçе чунран парăннă, тивӗçе чыслăн пурнăçлатпăр, – тет Антонина Виталиевна. – Пациентсене пулăшмашкăн яланах хатӗр. Ытти уйрăмрипе танлаштарсан пирӗн патра интереслӗрех пек туйăнать – тӗрлё çын килет. Кашнинех сыватса ура çине тăратассишӗн хамăртан килнине пурне те тăватпăр. Планпа палăртнă операци чылай ирттеретпӗр. Тӗрёссипе эпё шкулта вӗреннё чухнех сывлăх сыхлавçи пулма ёмётленнё».

Сăлтавсăр мар паллах. Пиччӗшӗн арăмё, инкӗшё эппин, Рената Ивановна пенсие кайичченех Тăвай больницин поликлиникинче ӗçленё. Ăна кура Антонина та шкул пӗтернё хыççăн медицина училищине çул тытнă. Абитуриентсем йышлă пулнипе конкурс витӗр тухайман. Чăн та, ытти профессие алла илме те май килнӗха – Канаш хулинче училищӗçем татах пулнă вӗт. Нимӗн те тăвайман, пӗри те килӗшмен. Медицинăра ăнăçман енне ветеринарие суйланă, Кострома облаçёнчи Галич хулинче ветфельдшера вӗренме тытăннă. Амăшӗн хӗрне аякра усрас килмен пулинех, вăл ыйтнипе çулталăкран çав специальноçпех Вăрнарти совхоз-техникума куçса килнё. Диплом илсен Тăвай тăрăхне таврăннă, «Советская Россия» хуçалăхра вылăхсене сипленё. Чунёпе вара медицинăнах ăнтăлнă – çулталăк çурă ӗçленё хыççăн Канашри медицина училищине тепӗр хут кайнă. Ăнăçнă ăна, фельдшера вӗренме илнё.

Халё, ава, Антонина Виталиевна – Тăвай енӗн ятлă-сумлă çыннисенчен пӗри, кăçал ăна ЧР Сывлăх çыхлавӗпе социаллă аталану министерствин Хисеп хучӗпе чысларӗç.

Ял-йышра та хисепре. Агроном çемйинче çуралса ӳснёскер çӗр ӗçне чунтан парăннă. Упăшки ашшё-амăшӗн аслă ывăлё пулнă май çемье çавăрсан уйрăлса тухма тивнё. Çын вырăнне туянса пӳрт лартнă вӗсем, сад ӗрчетнё. Пахча çимӗçе, улма-çырлана, сӗт-çупа ашпăша хăйсем валли кăна мар, ачисене тивӗçтермелӗх те туса илеççё. Сăмах май, икё хӗрё аслă пӗлӳ илсе пурнăçра хăйсен вырăнне тупнă, вӗсем – экономистсем. Галина çемье çавăрса Шупашкарта тӗпленнё, ашшё-амăшне мăнук парнелеме те ёлкёрнё. Тăваттăри Илюш – кукашшё-кукамăшён куç тулли савăнăçё. Галина Мускавра ӗçлесе пурăнать.

Кӗçённи 7-мӗш класра ăс пухать. «Ывăлăма Колья ура çине тăратиччен ӗçлесех пулать, сахалтан та 4-5 çул. Эпир пулăшмасан камас алă тăсса парё. Хамăра та çамăл пулмарё, çавăнпа ачасен шăпи телейлӗрех килтӗр тесе тăрăшатпăр», – тет амăшё.

Иккёленмелли çук: ăна та Димитриевсем халăха юрăхлă çитӗнтереççех, компьютерпа туслăскере программист профессине алла илме май туса параççех.

Чăннипех телейлё хӗрарăм вăл, Антонина Виталиевна. Мӗнпе тетӗр-и? Ачисемпе, мăшăрёпе. Тăванёсем йышлă унăн, пӗр-пӗриншӗн тӗрев пулмашкăн яланах хатӗр. Тăван пиччёшёпе шăллё Владимирпа Анатолий Тăвайӗнче тымар янă. Тӗрёссипе, иккӗмӗшёпе вӗсем йёкёрешсем-ха. Çут тӗнчене Антонинăран 15 минут маларах килнёскер 83-ри амăшне пăхса пурăнмашкăн та, çемйине тытса пымашкăн та, çывăх çыннисене хӳтӗлемешкён те ерçӳ тупать.

«Анне – Пуянкассинчен. Çавна май унта иккӗмӗш çыпăкри пиччё-шăллăм, аппа-йăмăк сахал мар. Хамăн 55 çулхи юбилее паллă тумашкăн пурте пухăнтăмăр, савăнтăмăр. Уяв сӗтелё хушшинче кăна мар, пысăк ёçсене тумалла чухне те пӗрле эпир», – тет Антонина Димитриева.

Кун-çулне медицинăпа çыхăнтарнисем хăйсен çывлăхне упрама пӗлеççё çав. Ёненетӗр-и, тивӗçлё кану ӳсёмне çитнё хӗрарăм çуллахи вăхăтра ёçе велосипедпа çӳрет. Шкулта гимнастикăпа туслашнăскер районта ирттерекен спорт мероприятийёсене паян кунченех хутшăнать.

■ **В.ИЛЬИНА.**
Тăвай районё

Çакăн пек те пулать

Мăнук парни

Çӗр чăмăрё футбол мечёкё пекех мар пулсан та çавах çаврăкине пурте пӗлетпӗр: унпа пӗрле хамăр та ёмёр тăршшёпех çаврăнатпăр, кирек хăш еннелле пӗр пăрăнмасăр утсан çул çӳреве пуçланă вырăнах çитсе тăма пултарни пирки те чухлатпăр.

Пурнăçра урăхла майпа та пӗр тӗле çаврăнса тухни пулкалать. Сăмахран, вăрмана кăмпана каятăн та ăна шыраса унталла-кунталла çаврăнатăн кăна – тулнă карçинккана йăтса кукăрăлса ӳснё хыр çумёнче кăшт канса илетён те кил еннелле тухатăп тесе утатăн. Çанталăкё ăмăр, хёвел пӗлёт хыçне пытаннă. Кун пек чухне йăнăш çулпа уттарнине туймастăн та – тепӗр еннелле таплаттаратăн. Мён амакё? Каллех кукăр хыр патне çитсе тăратăн. Унтан пăрăнса çул шырама пикенетён: çав йывăçпах пырса çапăнатăн. Ирёксёрех вăл хăш енчен мăкланнине сăнама тивет...

Парне те çавăн пекех çаврăнма пултарас пирки шухăшламан та. Тёплёнрех каласа парам-ха.

...Уяв ячёпе аякри хулара пурăнакан мăнук мана сухал хырмалли хатӗр парнелерё. Ахаль йышшине мар, телекуравра çине-çинех мухтаканнине.

–Асатте, пластмасса бритва йăлăхтармарё-и? Малашне çак хатӗрпе якалăн-çуталăн, – терё чӗркем тыттарса.

Кунашкаллине хам та иртнё уйăхри пенсипе асăнмалăх пултăр тесе туяннăччё-ха. Кун пирки Çеруша шарламарăм, парнине вара хапăлласа йышăнтăм, ватă çынна хисеп тунăшăн савăнтăм.

Пӗррехинче каç пулттипе Павăл шăнкăравларё:

– Кум, сана паçăртанпах кӗтетпӗр. Пурте пуçтарăннă. Хыпаланкала, вăр-вартарах пул...

Тинех аса илтём: ара, кумăн паян менелникçке! Суту-илӳ çурчё хупăнма ёлкёрнё, ăçтан парне туянмалла? Мăнук панине тытман-ха, çённипех. Пушă алăпа кайма аванмарланса хаклă çав япалана сумкăна чикме тиврё. Гастронома кӗрсе кучченеç илтём, «çутă пуçлă кăвакалне» те манса хăвармарăм. Павăл парнене хапăл пулчё.

Тепӗр уйăхран пирӗн пата Аслă Каçала пасара килнё Йăван ăшăнмашкăн тесе кӗчё.

– Хăта, çывхарса килекен уяв ячёпе сана парнепе савăнтарас терём, – кулкаласа тăсрё телекурав мухтакан çутă бритвăна. Сума сунăшăн савăннине пӗлтерсе ăна чӗререн тав турăм. Хăтана ăсатса ярсан курупкăна уçса пăхрăм та тӗлённипе тӳпех кайса ӳкмерём: хупăлчи айёнче эпё ручкăпа çырнă ят-шыв курăнса кайрё. Сăмах май, кирек мёнле япала туянсан та ăна хамăн тата атте ячёсен пӗрремӗш сас паллийёсемпе палăртас йăла пур манăн.

Тепӗр пасарта Йăван хăтана тӗл пултăм. Калаçса кайрăмăр. – Иван Николаевич, каçар та, ыйтса пӗлесех тетӗп: мана савăнтарнă парнӳне ăçта туяннă эсё?

Унăн сăнё улшăннине самантрах туйса илтём.

– Ăçтан пултăр, лавккаран ёнтё, – пӗлтерчё вăл куçне тартса.

–Тăхта-ха, çав япалана мана мăнукăм Çеруш аякри хуларан илсе килсе панăччё, хам вара алă палли тунăччё. Бритва каялла çаврăнса çитрё вӗт, э?

– Каçар, нимӗн илме аптрарăм. Манăн кун пекки пур-ха, хăтан çукчё тесе сана хёпёртеттерес шухăш тытрăм, – йышăнчё арçын. – Ăна мана пӗр уйăх каялла Александровкăри тăван панăччё. Парнене тепӗр çынна тыттарма юраманнине пӗлсех çапла турăм мар-и...

Кун хыççăн Павăл кумпа курса калаçмасăр тӳсеймерём. Вăл та малтан тавара лавккара туяннă теме пăхрё, кайран вара ман парнепе Александровкăри тусне чысланине йышăнмах тиврё.

Çапла мăнук парни аслашшё патнех çаврăнса çитрё. Ир тăрса унпа лайăх хырăнтăм, Çеруш калашле, çуталтăм. Алăран тек вёçертместёп ёнтё. Маншăн вăл уйрăмах хаклă вёт...

■ **Рев. РУБИН.**
Комсомольски районё

Унран вёренмелли нумай

Райпо правленийё лавкка çук ялсенче пурăнакансене куллен кирлё таварпа тивёçтерессине тивёçлипе хаклать. Кун пек чухне вёсем патне ятарлă машина çула тухать, халăха апат-çимёç, супăнь-порошок, ытти япала пырса парать. Кирлё тёк кравать-диван е строительство материалё, е йăлара усă куракан техника, е выльăх-чёрлёх валли хутăш апат турттарса пырать. Чăн та, çакна тивёçмешкён маларах саккас парса хумалла.

«Тин кăна-ха пёри шăнкăравласа сётел-пукан çитерсе пама ыйтрё. Ямайкасси еннелле çула тухсан кайса паратпăр», – тет Вячеслав Андреев водитель. Тёрёссипе, çак ёçсене вăл пурнăçлать. Унăн ГАЗ-51 3301 автомашини яланах рейсра. Вутлана, Кӳлçырмана, Очкассине тата ытти яла тăтăшах тухса çӳресе сутă тăвать вăл. Аслă ăру çыннисем çакăнпа уйрăмах кăмăллă, мёншён тесен кёрхиçурхи çанталăкра лавкаллă ялсене тухса çӳреме уйрăмах кансёр. Райпо автофургонё вара шăл çемми апата вырăнах çитерсе туянтарать. Кунсăр пуçне районти лавккасене куллен тавар турттарать арçын.

«Иртнё çулсенче пёр лавккана пёр машина тавар леçсе панă тăк халё суту-илёвён темиçе точкине харăсах çитсе килме тивет. Техникăна калкал ёçлеттерессишён тăрăшни кăна çителёксёр, таваршăн та яваплă пулмалла. Урăхла каласан райпо товаровечё пирёнпе тек çӳремест, хамăрах механик та, экспедитор та, инкассатор та. Укçи-тенкине илетпёр, кассăна хыватпăр, – тет Вячеслав Иванович. – Килёшет мана ку ёç. 1970 çулхи çу уйăхён 5-мёшёнче кунта килсе вырнаçнă та – урăх çёре куçас шухăш пуçра та пулман».

Яманак ялёнче çуралса ӳснёскер Красноармейски салинче тёпленнё – тăрăшулăхне кура райпо ертӳлёхё хваттерпе тивёçтернё. Мăшăрё те Мария Дмитриевна çак тытăмрах вăй хунă – тивёçлё канăва тухичченех çăкăр комбинатёнче тăрăшнă.

Вячеслав Ивановича коллективра хисеплеççё. Тивёçе чёре хушнă пек пурнăçлать вăл. Унăн автомашини яланах рейса тухма хатёр. Чăн-чăн хуçа пек вăхăтра юсанăран, сёрсе-тасатса тăнăран пёр кăлтăксăр ёçлет.

«Мана тăрантаракан вёт вăл, кустăрмаллă урхамахăм. Техника тёлёшёнчен вăхăтра пăхса тăнипе ку таранччен аварисёр ёçлетёп. Ывăлăмсене те çакнах вёрентетёп. Анатолийпе Владимир хам пекех водитель специальноçне суйласа илнё. Малтан вёсем те райпорах тăрăшрёç-ха. Çемье çавăрса кредитпа хваттер туянчёç те парăма вăхăтра саплаштармалла тесе республика тулашне çӳреме тытăнчёç. Ку машинăпа 20 çул «чупатăп», халё те вёр-çёнё пекех. Тивёçлё канăва тухсан унпа Володя ывăлăм ёçлессе шанатăп. Алли ларать унăн, чунё техникăнах кăмăллать», – тет руле 44 çул алăран яман Вячеслав Андреев. Сăмах май, унпа пёр ӳсёмрисем коллективри водительсен хушшинче çук та ёнтё. Райпо ертӳçисем вăл ăста наставник пулнине палăртаççё, çамрăксене унран вёренсе пымашкăн сёнеççё. Сăлтавсăр мар паллах, вăл – совет суту-илёвён отличникё, потребительсен кооперацийён тата ёç ветеранё. Сăнё коллективăн Хисеп хăми çинчен кайма пёлмен.

Вячеслав Ивановичпа Мария Дмитриевна салара пурăннине пăхмасăр çёр ёçёнчен писмен, ялти пекех выльăхчёрлёх усраççё, 10 сотка çёр çинче пахча çимёç çитёнтереççё, утă-улăм хатёрлеççё.

Икё хёрпе тăватă ывăл çуратса ӳстернё вёсем, тăваттăшё хăйсем çемье çавăрса аслашшёпе асламăшне, кукашшёпе кукамăшне 10 мăнук парнеленё. Çавăнпа та хăйсене çакă çутă тёнчере телейлисем тесе шутлаççё.

Кунсăр пуçне Андреевсем хаçат-журналпа та туслă, «Хыпар» çырăнса илеççё, самана уттипе тан пыма тăрăшаççё. Сăмах май, Вячеслав Иванович паян кунччен куçлăх тăхăнса курман-ха...

Хастар водителе, райпо ветеранне хăйне шанса панă автомашинине малашне те тёрёс-тёкел чуптармашкăн телейлё çул сунатпăр.

■ **Валентина ИЛЬИНА.**
Красноармейски районё

Усăллă канашсем

Атă–пушмак нӳрелмё

Хёл кунёсенче çул çине сапнă тăвар тата таса мар юр атă-пушмака сиенлесрен çак мелсемпе усă курма сёнетпёр:

● Тăварлă юрпа вараланнипе пушмак çине шурă йăрăмсем тухсан çакна эрех уксусёпе е спиртпа сăтăрмалла.

● Касторка çăвне пулăçсем тивёçлипе хакласçё. Ăна губка çине тумлатса атă-пушмака сёрмелле – сăран çемçелет тата шыв ями пулать.

● Нӳрёклёхрен сысна сали те сыхлать, унпа пушмака сăтăрмалла. Анчах ытлашши сёрме юрамасть – пӳлёмре ун çине тусан ларма пултрать.

● Çапла майпа хатёрленё хутăш та пулăшать: вёри шыв çийён тытса ирёлтернё пыл хурчён ăвăсне скипидар тата касторка çăвё хушмалла, атă-пушмака сёрмелле. Кун пек чухне вăл çуталса тăрать тата шыв ямасть.

Сăмах май, атă-пушмак кремё типсе кайнă тăк ăна çемçетме ансат: хутăша вёри шыв савăтне лартмалла кăна. Крем çăралăхёпе малтанхи шая çитсен унта вёрилентернё скипидар хушмалла та лайăх пăтратмалла.

Çунă япалана хёлле типётесси

● Нумай хваттерлё çуртсенче пурăнакансенчен чылайăшё çунă кёпе-йёме хёллехи вăхăтра ăшăтса тăман балконра çакса типётет. Япала кантра çумне шăнса ларасран ăна чӳхенё чухне шыва кăштах уксус хушмалла.

● Кантрана апат соди е тăвар ирёлчёкёпе йёпетнё татăкпа сăтăрма юрать.

● Йывăçран тунă хёстеркёчсем /прищепкăсем/ йёпе япала çумне çыпçăнса ларасран вёсене тăвар шывёнче пёр сехет тытмалла.

● Çакна та ан манăр: шăннă япала типсе çитмесёр ăна тёкёнмелле мар, унсăрăн «хуçăлма» пултарать.

Химипе мар, çут çанталăк панипе

Синтетикăран хатёрленё тёрлё порошок йăлара усă курма меллё паллах. Анчах вăл этем сывлăхёшён сиенлё. Тирпей-илем кёртнё чухне унсăр та май килет.

● Апат содипе алюмини, кёмёл, хурçă тата пластик витёсем лайăх тасалаççё, вăл сивётмёшри ырă мар шăрша тата савăтсапа лёккине пётерет.

● Лимон сёткенё савăт-сапари тутăх вырăнсене кăларать, кёмёлтен тунă кашăк-вилкăна йăлтăркка сăн кёртет.

Инвалидсене – пулăшу

Хевтесёрсем хӳтлёхсёр мар...

Раççей Федерацийён Президенчён Чăваш Республикинчи йышăну пӳлёмёнче Пётём тёнчери инвалидсен кунё умён «Инвалидсене çёнё хыпарпа тивёçтерес тёлёшпе РФ Пенси фончён пулăшăвён марафонён пётёмлетёвё» ыйтупа массăллă информаци хатёрёсен журналисчёсем валли пресс-конференци иртрё. Мероприятие федерацин Чăваш Республикинчи тёп инспекторён канашçи Андрей Синицкий уçрё, РФ Пенси фончён уйрăмён управляющийё Роза Кондратьева пенси службин пулăшăвне инвалидсемшён уçă тумалли мероприятисене ёçе кёртесси тата тухса çӳрейменнисене информацине тивёçтерессине йёркелесси çинче чарăнса тăчё.

Информаци марафонё пёлтёр Инвалидсен кунё умён вăй илнё. Тёллевё чăннипех пархатарлă пулнă – хевтесёр çынсене Пенси фончён пулăшăвне илмелли çёнё мелсемпе паллаштарнă тата хăйсен ирёкёсене вăхăтра пурнăçа кёртмешкён май туса панă.

Пенси фончё пулăшнипе марафон вăхăтёнче МИХсем вырăнти администрацисен тата ял тăрăхёсен сайчёсенче, район тата республика хаçачёсенче, радио тата телекурав кăларăмёсенче 1,6 пин материал вырнаçтарнă. Вёсен тематики анлă: инвалид пенсине тата уйăхри укçа тӳлевне ӳстересси пирки пёлтерни, Skype программăпа курав конференцийёсем ирттерни, патшалăх пулăшăвён порталёпе тата РФ Пенси фончён сайтёнчи электрон йышăнупа усă курма май пани, сусăрсене хăйсем пурăнакан çёрте мобильлё клиент служби йышăнни, МСЭ бюровёпе пёрле вырăна тухса инвалидлăха палăртни тата пенси ыйтăвёпе «пёр чӳрече» мелёпе консультацилени.

2013 çулта сусăр ачасен тата ачаранпах пёрремёш ушкăн инваличё шутланакансен пенсине, çавăн пекех вёсене пăхакан ашшё-амăшён тата опекунсен уйăхри тӳлевне ӳстересси пирки тёплён ăнлантарнă.

Пенси фончён пулăшăвне хевтесёр çынсем тёрлё майпа тивёçме пултараççё. Чи мелли – килтен тухмасăр Интернетпа усă курса. Пенси фончён сайтёнче /www.pfrf.ru./ йышăну урлă ыйту пама пулать – граждансен çырăвёсен çуррийё ытла çапла çитет. Тӳлевсёр Skype программăпа курав çыхăнăвё урлă консультаци параççё – асăннă пулăшупа Пенси фончён уйрăмё ёç кунёсенче 13-16 сехетсенче тивёçтерет. Патшалăх пулăшăвён пёрлехи порталёнче соцпакет, çавăн пекех обязательнăй пенси страхованийён тытăмёнчи харпăр хăйён лицевой счечё пирки информаци илме пулать.

Электрон пулăшусăр пуçне граждансене ёçленё е пурăннă вырăнта йышăнмашкăн 483 консультаци пункчё, вёсенчен 23-шне инвалидсен общество организацийёсен никёсё çинче йёркеленё. «Васкавлă лини» телефонёсем ёçлеççё. Мобильлё клиент службисем çула тухаççё, инвалидсем ыйтнипе килёсенех çитеççё. Тёрёссипе, район-хулари йышăнура çёкленё ыйтусен çуррийё ытла – сусăрсене канăççăрлантаракканни.

Патшалăхăн «Юрăхлă хутлăх» программипе килёшӳллён Пенси фончён çурчёсене хевтесёрсене пырса çӳремешкён меллё майлаштарнă. 2012-2013 çулсенче республикăри уйрăмăн тата территорири 7 управленин пӳлёмёсене сусăрсемшён хăтлă пултăр тесе çёнетсе улăштарнă. Фондăн 6 управленийёнче /Çёнё Шупашкарта, Вăрнарта, Йёпреçре, Муркашра, Пăрачкавра, Тăвайёнче/ кăçалхи чӳк уйăхёнче кӳмепе çӳрекен сусăрсем валли ятарлă хатёр /картлашка-çёклеш/ вырнаçтарнă. Пӳлёмсене вёсемшён меллё тăвасси малалла пырать – çак тёллевпе çитес икё çулта 6,7 млн тенкё тăкаклама палăртнă.

Пенси фончён уйрăмё республикăри 90 пин сусăрăн ыйтăвне тивёçтерет. Вёсене пенси, федераци çăмăллăхçи шутланнă май уйăхри укçа тӳлевё параççё. Виçисем чăн та инвалидлăх ушкăнёпе çыхăннă. Вăтамран кашнин пуçне уйăхра 10,6 пин тенкё тухать. Çарта сусăрланнисене тата Тăван çёр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннисене – инвалидлăх пуррисене вăтам виçерен виçё хут ытларах тӳлеççё.

Кăçалхи кăрлач уйăхён 1-мёшёнчен сусăр ачасен тата ачаранпах пёрремёш ушкăн инваличё шутланакансен социаллă пенсийён виçине 1,4 пин тенкёлёх хăпартнă. Ака уйăхёнчи индексацие шута илсен вёсем халё уйăхсерен 8861 тенкё тата федераци çăмăллăхçисен тӳлевне илеççё /сусăр ачасем – 2022, ачаранпах пёрремёш ушкăн инваличё шутланакансем – 2832 тенкё/. Асăннă ушкăнсене кёрекенсем пирён республикăра 6,6 пин çын.

2013 çулхи кăрлачăн 1-мёшёнче вёсене пăхакансене – ёçлемен вăй питти ашшё-амăшне /усрава илекенсене/ тата опекунсене /попечительсене/ – уйăхра 5500 тенкё /халёччен – 1200 тенкё/ компенсаци параççё. Çак тӳлеве пирён хутлăхра 2,5 пин çын тивёçет.

Пенси фончё инвалидсене пенси памалла тунисёр тата федераци çăмăллăхçисемпе ёçленисёр пуçне регионсен социаллă программисене финанслама хутшăнать. 2012 çулта Чăваш Республикин Социаллă программине 25 млн тенкё хывнă, çав шутра – Улатăр районёнчи Атратьри психоневрологи интерначён газпа ёçлекен котельнăйён тата тасатакан сооруженийёсен строительствине вёçлеме, социаллă 7 учреждение тёпрен юсама тата киле пырса социаллă пулăшу паракан уйрăмсен мобильлё бригадисем валли 9 автомашина туянма. Кăçал социаллă 2 учреждение юсама тата 2 автомашина туянма 3 млн яхăн тенкё уйăрнă.

Пресс-конференцие хутшăннисен уçăмлатмалли те сахал мар пулчё паллах. Вёсене хуравланă хыççăн уйрăм управляющийё Роза Кондратьева пенси ыйтăвёсене халăха ăнланмалла çутатнăшăн массăллă информаци хатёрёсене тав турё, ёçлё çыхăну çирёпленсе пырасса шаннине пёлтерчё.

■ **Валентина СМИРНОВА**

Ыйту-хурав

Хăй ирёкёпе каяс тесен

Хам ирёкпе ёçрен тухса каяссине пёлтерсе ертӳçёне икё эрне маларах çырса пёлтертём. Çав тапхăрта чирлесе ӳкрём, 5 кун «больничнăй çинче» пултăм. Кун пек чухне ёçлесе татмалли тапхăра тата 5 кунă тăсма пултараççё-и?

РФ Ёç кодексён 80-мёш статйин 1-мёш пайёпе килёшӳллён ёç хутшăнăвёсене хăй ирёкёпе пăрахăçлама йышăннă гражданинăн кун пирки ертӳçе икё эрнерен кая юлмасăр çырса пёлтермелле. Икё эрне – ёçлесе татмалли тапхăр мар, пуçлăха хăй каясси пирки аса илтермелли вăхăт шутланать. Урăхла каласан, çын çак хушăра чирлеме, канма, командировкăна кайма пултарать. РФ Ёç министерствин 2006 çулхи авăн уйăхён 5-мёшёнчи 1551-6-мёш Çырăвёнче палăртнă тăрăх ёçрен каясси пирки пёлтернё тапхăра чирленё кун хисепё чухлё тăсмаççё.

Сăмах май, ертӳçёпе калаçса татăлнă хыççăн икё эрне ёçлемесёрех тухса кайма пултаратăр. Тепӗр чухне çакнашкал срока çирёплетмеççё те.

Енчен те гражданинăн заявленийё малалла ёçлеме май килменнине пёлтернипе çыхăннă тăк /аслă шкула вёренме кёнипе, тивёçлё канăва тухнипе тата ытти те/ е пуçлăх ёçлев нормисене пăснине тупса палăртнă пулсан вăл асăннă тапхăр çитичченех килёшёве пăрахăçлама тивёç /РФ Ёç кодексён 80-мёш статйин 3-мёш пайё/.

Шанăç хучёпе усă кураймăр

Суд йышăнăвёпе пиччене ирёкрен хăтарнă. Колонире вăл пенси илсе тăрать. Анчах çав укçана шанăç хучё тăрăх мана партарасшăн. Çапла тума май килет-и?

Шел те, кун пек чухне шанăç хучё тăрăх пенси тӳлеме палăртман /РФ Пенси фончёпе РФ Сывлăх сыхлавёпе социаллă аталану министерствин 2004 çулхи нарăс уйăхён 16-мёшёнчи пёрлехи 15п-мёш йышăнăвёпе çирёплетнё Пенси тӳлемелли йёркен 7-мёш пункчё/.

Ирёкрен хăтарнă пенсионера çав укçапа Пенси фончён вăл ёçлесе юсанмалли учреждени вырнаçнă çёрти тытăмё тивёçтерет. Кун пек чухне пенсие тёрмере лараканăн лицевой счечё çине куçараççё. Унсăр пуçне шалăвён е тупăшён 25 процентёнчен кая мар сумма та çавăнтах пухăнать. Ирёкрен хăтарнисем çав шутран уйăхсерен хăйсене ёçлесе юсанмалли учрежденире пăхса усранин /апатлану, кёпе-тумтир, коммуналлă-йăла пулăшăвён хакёсем/ чăн тăкакёсем чухлё саплаштараççё /РФ Уголовлă-ёçлесе юсанмалли кодексăн 99-мёш статйин 4-мёш пайё/.

Çавăнпа пёрлех ирёкрен хăтарнисем тёлёшпе саккунăн асăннă нормипе килёшӳллён вёсен çемйисен членёсене, колони администрацийё ирёк панипе ытти граждана пулăшмашкăн укçа ярса памалли майсене палăртнă.

Хуралтăсене шута илтермелле-и?

2008 çулта ялта çёр лаптăкёпе пёрле çурт туянтăмăр. Пёлтёр ун çумне хушма хуралтăсем – мансарда, веранда, гараж – лартрăмăр. Халё хула çывăхёнче тепёр çурт илме май пур. Малтанхине сутас тăк хамăр вăйпа çёкленисене те шута илтермелле-и?

Мансардăпа верандăна реконструкци тумашкăн ирёк илмесёр лартнă тăк çуртăра сутмашкăн чăрмантаракан сăлтавсем сиксе тухма пултараççё. Çавăнпа та кадастр инженерё патне кайса çуртăн техника паспортне çёнёрен тутармалла. Унта эсир кёртнё улшăнусене кăтартмалла. Çёнё план илнё хыççăн Кадастр палатинче çурта шута тăратмалла. 2015 çулхи пуш уйăхён 1-мёшёччен унăн паспорчё ăна лартнине тата сăнланине çирёплетекен тёп документ шутланать. Çакăнччен эсир çуртăрăн харпăрлăх правине ансат мелпе регистрацилеме пултаратăр /федерацин 1997 çулхи утă уйăхён 21-мёшёнчи 122-мёш саккунё/.

Кăларăма Валентина СМИРНОВА хатёрленё.

Çавра сётел

Литература кăларăмĕсем тавра

«Хыпар» Издательство çурчĕ çак кунсенче йĕркеленĕ «çавра сётеле» писательсемпе поэтсем, литература критикĕсем хутшăнчĕç. Мĕн тĕллевпе пуçтарăннă-ха вĕсем чăваш халăхĕн тĕп хаçачĕн редакцине?

Ăна ИÇ директорĕ-тĕп редакторĕ Алексей Леонтьев çапла палăртрĕ:

– Виçĕ уйăх каялла пирĕн йыш пысăкланчĕ, çав шутра литература кăларăмĕсем – «Тăван Атăл», «Капкăн», «ЛИК» журналсем – хушăнчĕç. Шел, 2004 çулта «Ялав» журнала пĕтерсе хучĕç. Çак пулăм – чăваш литературишĕн пысăк çухату. Тăван культурăпа, йăла-йĕркепе çыхăннă пулăмсене те – чăваш туйне, тĕррине, апат-çимĕçне тата ыт. те – упраса хăвараймарăмăр. Çавăнпа та черетлĕ çухатуран хăтăлса юласчĕ. Сăмахăм литература кăларăмĕсен тиражне сыхласа хăварса малалла ÿстересси тата вĕсен «ăш-чикне» лайăхлатасси, паха произведенисемпе пуянлатасси пирки. Паллах, эсир кунта пĕрле чух чăваш литературин паянхи ĕçĕ-хĕлĕ, ăна малалла аталантарасси çинчен те калаçăпăр. Республикăра 1000 çын пуçне илес тĕк вулакансен кăтартăвĕ пĕрре те ямăк мар. Мĕн пуррине сыхласа хăвармаллах. Çавăн пекех «Хыпар» çумĕнче икĕ е эрнере пĕрре тухакан публицистика журналĕ курас килет.

«Çавра сётеле» хутшăннисем хăйсен шухăшĕпе паллаштарчĕç.

Юхма Мишши, Чăваш халăх писателĕ:

– «Тăван Атăл» – литература енĕпе кун çути куракан журналсенчен пĕртен пĕр кăларăм. Çавăнпа та вăл пур союзри писателе те пĕрлештермелле. Виçĕ союз та пĕр тан. Эпĕ çакна куратăп: çыракансем хулара мар, ялта ытларах. Ку енĕпе учительсем хастар ĕçлеççĕ. Вĕсене хавхалантармалла, чăвашлăх çулĕ çинчен пăрса ямалла мар. Эпĕ çакна асра тытатăп, çавăнпа союзра та ялта пурăнакан çыравçăсем йышлăрах. Çакскерсем хăйсен укçипе кĕнеке кăлараççĕ, чунне парса ĕçлеççĕ. Вĕсен ячĕсене ытларах курасшăн та эпĕ «Тăван Атăл» страницисенче. Унта вĕсем хăйсем тĕллĕн пыма вăтанаççĕ е шикленеççĕ.

Виталий Родионов, филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн профессорĕ, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ертсе пыракан ĕçченĕ:

– Манăн шухăшăмпа – писательсем йĕркеленĕ виçĕ союзри çыравçăсен шайĕ тĕрлĕрен. Вĕсене Петĕр Хусанкай, Константин Иванов шайĕпе виçсе хакламалла. Çырма пĕлнĕ-пĕлмен çынсене пичетленипе литература аталанаймасть. Союз шучĕ мар, çыракан писательсем пурри пĕлтерĕшлĕ. Çамрăккисемпе ĕçлекен кружок е шкул кирлĕ.

Писатель тивĕçĕ чăвашла çырма пĕлнинче çеç мар, чи пĕлтерĕшли – халăх, ун шăпи пирки шухăшласа çырни. Пирĕн, аслисен, çамрăксене ăсталăха туптама тата кирлĕ юхăма кĕртсе яма пулăшмалла. Эпир çамрăк чухне пирĕнпе ĕçлекенсем пурччĕ. Сăмахран, Алексей Воробьев ятарласа ĕçлетчĕ. Кашни районпа çыхăну тытатчĕ. Университетри «Çил çунат» литература кружокĕ те пултарулăх ĕçĕнче хавхалану кÿнĕ. Тен, «Хыпар» çумĕнче çамрăксемпе ĕçлекен пĕр-пĕр ушкăн йĕркелемелле?

Ирина Митта, «ЛИК» журнал редакторĕ:

– Литература критерийĕ пирки асрах тытмалла. Авторсем килсех тăраççĕ, анчах хайлавĕсен шайĕ ытларах чух вулакана тивĕçтермест. «Тăван Атăл» журналта ĕçлекенсем те чи лайăххисене суйласа илсе пичетлеççĕ. Вăл е ку автора кÿрентерес тĕллев çук. Лайăх ĕçшĕн редактор савăнать çеç. Эпир ытларах чухне çукран пур туса ларатпăр. Çамрăк çыравçăсем çукки – пирĕн инкек. Кашнин хăйĕн вырăнĕнче мĕн тума пултарнине пурнăçламалла.

Анатолий Кибеч, писатель:

– Ялти çыравçăсем вырăнти шухăшлавпа пурăнаççĕ. Хуларисем пĕрпĕринпе хутшăнса аталанаççĕ, ăсталăха ÿстерсе пыраççĕ.

Литература пирки калас тăк – тепĕр чухне кĕнекене презентаци валли çеç кăларнăн туйăнать. 150 тиражпа тухакан кĕнеке те пур вĕт. Жанр тĕлĕшĕнчен журнал валли чи лайăххи – повеç. Ытла вăрăм та, кĕске те мар.

Тăван литературăна çĕклеме вăйхăват юлнă-ши, йăнăшсене тÿрлетме пултарăпăр-ши? Пултаруллă çамрăксене шырамалла, манăн шанăç – вĕсенче. Сĕнĕвĕм çакăн пек: «Сунтал» журнала çĕнĕрен кăларма пуçламалла.

Сергей Павлов, ЧР Профессионал писательсен союзĕн председателĕ, Чăваш халăх писателĕ:

– Эпир халĕ çул юппинче тăнăн туйăнать. Журнал тума тытăнатпăр – нимĕн те çук пек, вăл тухать те – пур иккен литература та тетпĕр. Хăй вăхăтĕнче калав пичетлес тесен çулĕçулĕпе черетле тăнă. Халĕ авторсем хыççăн хамăр чупатпăр. Патшалăх енчен литература, хаçат-журнал политики çук. Чĕлхе, ытти енĕпе программа пур вĕт-ха, литературăпа пичете аталантармалли программа та кирлĕ. Республика ертÿлĕхĕ халăхăн тĕрлĕ сийĕпе тĕл пулать, çыравçăсем те унпа курнăçасшăн, анчах ниепле те май килмест-ха.

Çыравçăсем хăйсен тĕп журналне çырăнма васкаманни те пăшăрхантарать.

Юрий Артемьев, филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн профессорĕ:

– Эпĕ «Тăван Атăл» лаççинче часчасах пулатăп. Унта ĕçлекен Арсений Тарасов та, Василий Кошкин-Кервен те яланах материал тÿрлетсе ларнине асăрхатăп.

Писательсен виçĕ союзĕнче 350 ытла çын. Кашни хăй пирки пултаруллă тесе шухăшлать. Союзсем вĕсен пуçлăхĕсем валли çеç кирлĕ пек туйăнать тепĕр чухне: ят-сум, чап илме, тухса çÿреме... Çавна пула хамăра улталатпăр.

Литература халăх сасси тетпĕр. Паянхи ял çыннин сăн-сăпачĕ, унăн шалти тĕнчи мĕнле, мĕн ĕçлет, пуласлăха мĕнле курать? Пур-и вăл уншăн? Тĕнче культурипе мĕнле шайлашура, пĕр енĕпе те пулин сыпăннă-и унпа? Хăй сывлăшĕпе пурăнать-и?

Çавăн пирки вуласа пĕлес килет манăн.

Литература пуласлăхĕ тăван чĕлхепе литературăна вĕрентекенсем чăваш ачисемпе мĕнле ĕçленинчен те нумай килет. Предмета ячĕшĕн çеç вĕрентнипе чĕлхене упраса хăвараймăн. Писательсен шкулсене ытларах тухса çÿремелле.

Василий Кошкин-Кервен, «Тăван Атăл» журнал ĕçченĕ:

– Пирĕн республикăра писательсен союзĕ виççĕ пулни çав тери кулăшла та, питĕ пăшăрханнуллă та. Тутарсен те, пушкăртсен те, якутсен те, çармăссен те... çакнашкал пăтравлăх çук.

Чăвашсен лайăх çакăн пек йăла пур: ашшĕ-амăшĕнчен уйрăлса тухнă хыççăн та çуралса ÿснĕ çурт-йĕр çыншăн тĕп килех шутланать. Эппин, пирĕн республикăра та тĕп союз пур. Иккĕшне халăхра «Юхма ушкăнĕ», «Агивер пĕрлĕхĕ» теççĕ. Сăмах май, Агиверăн тĕп союзпа пĕрлешес кăмăлĕ те пур иккен. Пурте пĕрлешсен тем пекехчĕ. Çакă çыравçăсене те хавхалантарĕччĕ, республика ертÿçисем те вĕсене ытларах хакла пуçлĕç.

Денис Гордеев, Чăваш халăх писателĕ:

– Кĕçех «Çамрăк ятсем» ярăмпа çĕнĕ кĕнеке тухмалла. Ача-пăча, çамрăксен республика библиотеки йĕркелет ăна. Эпĕ çав кăларăмăн консультанчĕ. Çамрăксен хушшинче турă панă пултаруллă ачасем пур. Çавăнпа манăн шанчăк сÿнмен. Чăваш литератури такăнасса такăнчĕ, анчах тÿнсе кайман-ха.

Писатель вăл – профессионал. Учитель, строитель, воспитатель тата ытти пекех. Эпир халĕ кама кирлĕ çавна писатель тетпĕр. Ĕлĕкрех СССР Писательсен союзĕн членĕсене çапла калана, ыттисене литератор тенĕ. Ун стажĕ пĕрремĕш произведени пичетленнĕ кунран пуçланнă. Хваттер валеçнĕ чухне ăна 20 тăваткал метр хушса панă.

Журнал ĕçĕ нихăçан та çăмăл пулман. Манăн шухăшăмпа – унта чи малтанах литература критикине, публицистикăна чĕртсе тăратмалла. Унсăр пуçне вăл е ку автора пĕр-пĕр ыйтупа ятарлă темăпа çыртармалла.

Николай Ишентей, «Капкăн» журнал редакторĕ:

– «Капкăна» та ĕлĕкхи пек çыракан çук. Хамăн тупмалла, тултармалла. Çамрăксемпе, уйрăмах студентсемпе, ĕçлеме тăрăшатăп. Вĕсем сăн ÿкерчĕксем те, материалсем те илсе килеççĕ. «Капкăнăн» малтанхи традицийĕсене тытса пырасшăн, фельетонсем, памфлетсем, юптарусем пичетлетпĕр.

Порфирий Афанасьев, Чăваш халăх поэчĕ:

– «Тăван Атăла» илсе тăратăп, кашни номерне сиктермесĕр вулатăп. Хам та унăн авторĕ.

Ĕлĕкхи опытпа та усă курмалла, районсенче журнал кунĕсене ирттермелле. Ас тăватăп-ха: Алентей ял хуçалăх темипе ĕçлекенсене Вăрмар, Вăрнар районĕсене илсе тухса пленум ирттеретчĕ.

Юрий Сементер, Чăваш халăх поэчĕ:

– «Ялав» журналта эпир пысăк йышпа ĕçленĕ. Штатра 13 çыннчĕ. Поэзи, проза, публицистика пайĕсем пулнă. Пысăк журнала икĕ çын çеç кăларни – тĕлĕнтермĕш пулăм.

Авторсене тÿлессине йĕркелесе ямалла. Вĕсем 20 çул гонорар илмесĕр пурăнчĕç. Манăн шухăшăмпа – республика ертÿçисен хаçат-журналпа çыхăннă çивĕч ыйтусене тĕплĕн пĕлмеллех. Писательсем темиçе союза пайланни чиновниксемшĕн усăллă та пек туйăнать. Укçа ыйтсан эсир нумайăн, пурне те ăçтан парса çитерĕн тейĕç.

Арсений Тарасов, «Тăван Атăл» журнал редакторĕ:

– Журналăн пĕр тĕллев – вулакана лайăх литературăпа паллаштарасси. Вăл е ку союз çыравçисен хайлавĕсене кăна пичетлеççĕ тени тĕрĕс мар, произведени йĕркеллĕ çеç пултăр. Халăх лайăх, чунлă, ăраскаллă япалана вулать. Эппин, чăвашлăх туйăмĕ пур-ха.

■ **Надежда СМИРНОВА**

Тĕпел

Василий Пушкин: «Чăваш ятне ярас темен»

Асăннă ярăмăн черетлĕ хăни хальхинче – педагогика наукисен кандидачĕ, ЧР Писательсен союзĕн тата РФ Журналистсен союзĕн членĕ, ЧР вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, чăваш тата вырăс шкулĕсенче чăваш чĕлхипе тата литературипе пĕлÿ памалли 7 учебник тата хрестоматисен, 30 вĕренÿпе меслет пособийĕн авторĕ – Василий ПУШКИН. Хăй вăхăтĕнче кафедра заведующийĕнче, Вĕрентÿ институчĕн проректорĕнче, Ăслăлăхпа методика центрĕн директорĕнче ĕçленĕ вăл.

– Василий Николаевич, калăр-ха, мĕн вăл арçыншăн 60 çул?

– Çамрăк чухне 60 çулти арçын ватă çын пек туйăнатчĕ. Каярах, аслăрах çултисене: «Утмăла çитрĕм те ултă çулти ача ăсĕ кĕчĕ тесе ир тĕнсе ан çÿре»,–тесе саламланине те ас тăватăп. Йывăр ĕçре хуçăлман тăк, пурнăç йĕркеллĕ тĕк, сывлăх пур тăк – 6 теçетке çул арçыншăн нумай мар. «Этемлĕхĕн вăйлă çуррийĕ нумай пурăнмасть»,– теççĕ пулин те хальхи вăхăтра сакăр вуннăран, тăхăр вуннăран иртнисем те йышлăн. Хăвна йĕркеллĕ пăхайсан, çынна нушалантармасан мĕншĕн пурăнмалла мар? Ватăсем пурăнччăр, сывлăш пурне те çитет. Чи кирли – пурнăç интересĕ пултăр.

– Эсир хăй вăхăтĕнче «çăпаталлă» тракторпа ĕçленине, стройкăра пилĕк-çурăм авнине пĕрре те ĕненес килмест.

– Шкулта вĕреннĕ вăхăтра аттепе пĕрле хирте тракторпа ĕçленĕ. Эпĕ тракторист пулăшуçиччĕ. Тепĕр чухне виçшер смена та йĕркеленĕ. Çĕрлехи вăхăтра тÿпенелле мĕн чухлĕ пăхман-ши? Çĕрле урăх мĕн тумалла? Тепĕр чухне пăхаттăм та – атте çăварне вылятса пыратчĕ. «Хурçă ут» шавĕпе лайăх илтĕнместчĕ. «Мĕн тăватăн, атте?» – ыйтаттăм тĕлĕнсе. «Салтак юрри юрлатăп, ачам»,– тетчĕ вăл. Вара эпĕ те аттепе пĕрле юрра яра параттăм. Тата вăл мана çăлтăрсене кăтартса, вĕрентсе пыратчĕ. «Ав, Алтăр çăлтăр, кĕçех вăл куркине пăрать те шывĕ аври тăрăх тăкăнма пуçлать», – йăл! кулатчĕ аттеçĕм. Çăлтăрсем тăрăх миçе сехет çитнине те палăртатчĕ вăл. Кайран шурăм пуç килнине сăнаттăмăр. Çаксем йăлтах туйăма аталантарма пулăшнă. Манăн тете Александр шкул çулĕсенче комбайнер пулăшуçинче ĕçлерĕ, эпĕ вара 10 класс пĕтеричченех аттепе çÿрерĕм. Эпĕ унпа 1971 çулхи юпан 5-мĕшĕччен ĕçлерĕм те 6-мĕшĕнче Шупашкара килтĕм.

– Ял хуçалăх академине вĕренмешкĕн кĕме-и?

– Çапла çав /кулать!/. Эпĕ ача чухне выльăх-чĕрлĕхе питĕ юрататтăм. Атте: «Атя, зоотехника вĕрен», – терĕ. Тете вара манран агроном тăвасшăнччĕ. Пĕлетĕп ĕнтĕ: ку профессисем манăн мар, апла пулин те аслисем каланипе аслă шкул алăкĕн хăлăпне пырса тытрах куçăмсăр майпа истори факультетĕнче пĕлÿ илтĕм. Унсăр пуçне Мускаври Шолохов ячĕллĕ университетран вĕренсе тухрăм. Пур специальноçĕпе те ĕçленĕ. Учебниксем çырнă, шкулта та, аслă шкулта та вăй хунă, истори, культурологи, социологи вĕрентнĕ. Халĕ – Кÿкеçри професси училищин директорĕн çумĕ. Общество пурнăçне хастар хутшăнатăп. Кооператив çуртĕнче пурăнатăп. 25 çул ĕнтĕ – унăн председателĕ. Хуçалăх ыйтăвĕсене тăтăш татса пама тивет.

– Эсир чылай çул студентсемпе ĕçлетĕр. Мĕнлерех пулмалла преподавателĕн?

– Унăн пĕр пеклĕхрен /штампсеннчен/ хăтăлмалла. Аудиторипе пĕр чĕлхе тупса «кĕвĕллĕ» ĕçлеме пĕлмелле. Лекцисен яланах интереслĕ пулмалла, материала çĕнĕлле уçса памалла. Телей тени укçара тата унăн хисепĕнче мар. Вĕрентекенĕн çамрăксене пурнăçа юратма, шухăшлама, танлаштарма, тĕллеве тупма пулăшма хăнăхтармалла.

– Çын ĕçпе кăна пурăнмасть. Çемйĕр пирки те пĕлес килет.

– Мăшăрăм Клара Владимировна ЧПУн медицина факультетĕнче ют чĕлхе кафедрин заведующийĕнче нумай çул ĕçлерĕ. Халĕ – ют çĕр-шыв студенчĕсемпе ĕçлекен факультетăн деканĕн çумĕ. Икĕ ывăл – Александрпа Николай – çитĕнтернĕ эпир. Асли – çар çынни. 7 çул каялла мана асатте турĕç. Вăхăта мăнукăмпа Игорьпе ирттерме кăмăллатăп.

– Калăр-ха, сире ача чухне «купăста пуç» тесе витлемен-и?

– Çамрăк чухне пасарта çухатсан пулас мăшăрăм ялан шурă пуç шыраттăмччĕ тетчĕ. Ача чухне вара урама тухма çукчĕ: «Купăста пуç, купăста пуç!» – тесе шăл йĕретчĕç. Мана ку питĕ тарăхтаратчĕ. «Мĕншĕн çынсем пек пулманши?» – тесе кулянаттăм.

– Хушамат историне те пĕлесчĕ...

– Хăй вăхăтĕнче Çĕрпÿрен Пушкин хушаматлă çар пуçлăхĕ пулнă. Манăн мăн асатте ун патĕнче хĕсметре тăнă. Каярах вăл çав хушамата çыртарнăмĕн. Манăн асатте Максим Пушкин шкулта вĕреннĕ чухне сăвăсем çырнă иккен. Вĕрентекенĕ, вырăс çынни, ăна сĕре мухтанă. «Эсĕ сăвăсене чăн-чăн Пушкин пекех хайлатăн»,– тенĕ. Ялта, Патăрьел районĕнчи Нăрваш Шăхальте, манăн тăванăм Александр Сергеевич Пушкин та пурччĕ. Унăн икĕ хĕрччĕ. Хăй пурнăçран уйрăлнă ĕнтĕ. Тĕрĕссипе, ялта Пушкинсем юлмарĕç. Аттепе анне те пурăнмаççĕ ĕнтĕ. Тĕп кил пушă ларать. Çимĕке кайсан кĕрсе тухатăп. Яланах куç шывланать. «Юлашки пĕрене çĕриччен лартăр, ан сутăр»,– тетĕп йăмăкăма. Темле çав...

Сăмах май, манăн ĕç пÿлĕмĕнче яланах – А.С.Пушкин портречĕ. Килте те пур. Унăн мĕн пур произведенине тирпейлĕ упратăп.

– Чăваш Енре Пушкинсем нумайăн-ши?

– Пур вĕсем. Сĕнтĕрвăрри тăрăхне студентсене халăх сăмахлăхне пухма ертсе кайнăччĕ. Суккăр пĕр арçын юрăсем юрласа пачĕ, юмахсем каларĕ. Хушаматне ыйтрăмăр та: «Пушкин», – терĕ. Университета вĕренме кĕнĕ чухне Гена Пушкин пурри пирки каларĕç. Шел, вилчĕ вăл. Етĕрне районĕнчи Иваньковăра «Хисеп хăминче» Пушкин хушаматлă 6 çынна курнăччĕ. Муркаш районĕнчи Москакассинче те, Комсомольски районĕнчи Аслă Чурачăкра та, Çĕрпÿ тăрăхĕнче те Пушкинсем пуррине пĕлетĕп. Пенсие тухсассăн Чăваш Енри Пушкинсен ассоциацине йĕркелетĕп тесе сĕмленетĕп-ха. Çав шухăша пурнăçлатăпах пулĕ тетĕп.

– Пушкин хушамат пурнăçра пулăшнă-и сире?

– Шкулта вĕреннĕ чухне çĕнĕ вĕрентекен килнĕ тĕк – ялан манран урок ыйтатчĕ. Эпĕ ăна хăнăхса çитнĕччĕ. Икĕ эрнене яхăн кашни кун уроксене хатĕрленсе каймаллаччĕ манăн. Кайран вара, ыттисене палласа çитсен, манран питех ыйтмастчĕ. Ывăлăмсене те: «Сирĕн çав хушамата тивĕçлĕ пулмалла», – тесе вĕрентеттĕм. Пушкин хушаматлă пулнăшăн хĕпĕртетĕп эпĕ.

– Паян мĕн пăшăрхантарать сире?

– Чăвашсем пĕр-пĕрне юратманни кăмăла хуçать. Шел те, халĕ Патăрьелпе Елчĕк районĕсенчи ялсенче те чăваш ачисем вырăсла пакăлтатаççĕ кăна. Ĕмĕрĕпе пуçтарăннă чун хăвачĕ чĕлхерен куçать. Ĕмĕрхи код çухаласран питĕ хăратăп. Турă чĕлхе панă тăк халăха – апла пурăнмалла унăн!

– Василий Николаевич, интереслĕ калаçушăн тав. Сире юбилей ячĕпе саламлатпăр, çирĕп сывлăх, пысăк çитĕнÿсем сунатпăр.

■ **Роза ВЛАСОВА**

Съезда хутшăннă

Раштавăн 2–4-мĕшĕсенче Мускаври "Крокус Экспо" куравăшра тавралăха хÿтĕлекенсен пĕтĕм Раççейри IV съезчĕ иртнĕ.

Республикăран унта ЧР Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин, Росприроднадзор управленийĕн, Экологие тата çут çанталăкпа усă курассине тĕпчекен ăслăлăх институчĕн, Чăваш патшалăх радиологи центрĕн, В.И.Чапаев ячĕллĕ обществăн, Çĕнĕ Шупашкарти биологин тасату хатĕрĕсен предприятийĕн, Шупашкарти "Спецавтохозяйство", "Меркурий" обществăсен, çут çанталăка хÿтĕлекен ытти организаци элчисем – пурĕ 17 делегат – хутшăннă. "Экологири çĕнĕлĕх" куравра Чăваш Ен çут çанталăк ресурсĕсемпе мĕнлерех усă курнине, тăван тавралăха еплерех хÿтĕленине кăтартакан экспозиципе паллаштарнă.

Сăмах калакансем тавралăха хÿтĕлессипе, саккунсене улшăну кĕртессипе çыхăннă çивĕч ыйтусене çĕкленĕ. Уйрăммăн илсен çут çанталăк пуянлăхĕпе перекетлĕ усă курма, çынсене хăрушлăха кĕртсе ÿкерес мар тесе экологи инкекĕсем çинчен вăхăтра пĕлтерме, вăрмана упрама чĕнсе каланă. Сайра тĕл пулакан чĕр чунпа ÿсен-тăрана пачах çухаласран хÿтĕлесси, браконьерсемпе лайăхрах кĕрешесси çинчен витĕмлĕ калаçнă.

■ **С.СЕРЕГИН**

Факс: /8352/ 28-83-70. E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерÿ
Тел.: 28-83-70. 316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ.

На основании Земельного кодекса РФ, Постановления Правительства РФ от 11 ноября 2002 г. №808 "Об организации и проведении торгов по продаже находящихся в государственной или муниципальной собственности земельных участков или права на заключение договоров аренды таких земельных участков", постановления администрации Ибресинского района от 03.12.2013 г. №660 "Об утверждении перечней земельных участков, расположенных на территории Ибресинского района, выставляемых на торги (аукцион)", администрация Ибресинского района проводит открытый аукцион, который состоится **15.01.2014** года в **10 часов** в зале заседаний администрации района по адресу: Чувашская Республика, Ибресинский район, пгт. Ибреси, ул. Маресьева, дом 49.

Способ продажи - аукцион, открытый по форме подачи предложения по цене и размера годовой арендной платы.

Организатором торгов выступает отдел экономики и управления имуществом администрации Ибресинского района.

На аукцион выставлены следующие земельные участки:

Лот №1. Земельный участок с кадастровым номером 21:10:080101:781 площадью 5046 кв.м., расположенный по адресу: Чувашская Республика, Ибресинский район, Айбечское сельское поселение.
Вид права: собственность.
Целевое назначение: для ведения сельскохозяйственного производства.
Категория земель: земли сельскохозяйственного назначения.
Обременения отсутствуют.
Начальная цена земельного участка: 24 600 (Двадцать четыре тысячи пятьсот) рублей 00 копеек.
Сумма задатка: 4 920 (Четыре тысячи девятьсот двадцать) рублей 00 копеек.
Задаток установлен в размере 20% от начальной цены земельного участка.
Шаг аукциона: 1 230 (Одна тысяча двести тридцать) рублей 00 копеек.

Лот №2. Земельный участок с кадастровым номером 21:10:220401:148 площадью 99347 кв.м., расположенный по адресу: Чувашская Республика, Ибресинский район, Березовское сельское поселение.
Вид права: собственность.
Целевое назначение: для сельскохозяйственного производства.
Категория земель: земли сельскохозяйственного назначения.
Обременения отсутствуют.
Начальная цена земельного участка: 444 000 (Четыреста сорок четыре тысячи) рублей 00 копеек.
Сумма задатка: 88 800 (Восемьдесят восемь тысяч восемьсот) рублей 00 копеек.
Задаток установлен в размере 20% от начальной цены земельного участка.
Шаг аукциона: 22 200 (Двадцать две тысячи двести) рублей 00 копеек.

Лот №3. Земельный участок с кадастровым номером 21:10:060101:1538 площадью 167800 кв.м., расположенный по адресу: Чувашская Республика, Ибресинский район, Большеабакасинское сельское поселение.
Вид права: аренда, сроком на 5 (пять) лет.
Целевое назначение: для сельскохозяйственного производства.
Категория земель: земли сельскохозяйственного назначения.
Обременения отсутствуют.
Размер годовой арендной платы земельного участка: 11 750 (Одиннадцать тысяч семьсот пятьдесят) рублей 00 копеек.
Сумма задатка: 2 350 (Две тысячи триста пятьдесят) рублей 00 копеек.
Задаток установлен в размере 20% от размера годовой арендной платы земельного участка.
Шаг аукциона: 587 (Пятьсот восемьдесят семь) рублей 50 копеек.

Для участия в аукционе претенденты должны представить в срок до **10.01.2014** года следующие документы:
- заявку на участие в аукционе, по установленной форме с указанием реквизитов счета для возврата задатка;
- квитанцию об уплате задатка;
- копию документов удостоверяющих личность (паспорт и ИНН) - для физических лиц;
- юридические лица дополнительно представляют нотариально заверенные копии учредительных документов и свидетельства о государственной регистрации юридического лица.

Документы, содержащие неоговоренные помарки, подчистки, исправления и т.п. аукционной комиссией не рассматриваются. Одно лицо имеет право подать только одну заявку. Заявка, поступившая по истечении срока ее приема, подлежит возврату претенденту.

Организатор торгов имеет право отказаться от проведения аукциона не позднее, чем за 3 (три) дня до его проведения.

Дата начала приема заявок **11.12.2013** года. Прием заявок на участие в аукционе осуществляется в рабочие дни с 8 час.00 мин. до 17 час.00 мин. по адресу: Чувашская Республика, Ибресинский район, пгт. Ибреси, ул. Маресьева, дом 49 (каб. 304), телефоны для справок: 8(83538) 2-25-71, 2-12-18.

Определение участников торгов состоится **13.01.2014** года в администрации Ибресинского района (каб. 304) в 10 час. 00 мин.

Задаток перечисляется на счет: Ибресинский райфинотдел администрация Ибресинского района Чувашской Республики Чувашское ОСБ 8613 г. Чебоксары БИК 049706609 № счета получателя платежа 40302810075063007021 ИНН 2105004038 ОКАТО 97213551000 КПП 210501001 Лицевой счет 05053ЧД0012. Сумма внесенного задатка засчитывается в счет стоимости земельного участка. Возврат задатка участникам, не выигравшим аукцион, осуществляется в течение 3 (трех) банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

Победителем аукциона признается участник, предложивший наиболее высокую цену за соответствующий земельный участок. Договор подлежит заключению в срок не позднее 5 (пяти) дней со дня подписания протокола о результатах аукциона. Последствия уклонения победителя аукциона от подписания протокола либо заключения договора определяются в соответствии с гражданским законодательством РФ.

Прием заявок, оформление документов для участия на торгах, ознакомление с формой заявки, проектом договора купли-продажи или аренды земельного участка, осмотр земельных участков на местности (с предварительным согласованием с претендентами) осуществляются в рабочие дни с **11.12.2013** года по **10.01.2014** года в отделе экономики и управления имуществом администрации Ибресинского района Чувашской Республики по адресу: Чувашская Республика, Ибресинский район, пгт. Ибреси, ул. Маресьева, д.49, каб.304.

Администрация Асхвинского сельского поселения Канашского р-а ЧР предоставляет в аренду сроком на 49 лет земельный участок площадью 105920+/-2848 кв.м с кадастровым номером 21:11:140308:99, расположенный по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Канашский район, с/пос. Асхвинское, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала, для сельскохозяйственного производства.

Заявления принимаются в течение месяца со дня опубликования по адресу: 429306, Чувашская Республика, Канашский район, д. Б.Бикшихи, ул. Ленина, д.11а. Телефон для справок 8(83533) 60-6-17.

УСЛУГИ

13.Бурение колодцев, скважин, **установка** опор ЛЭП; **к/кольца,** бордюры, брусчатку. Д-ка. Т.: 8-965-685-89-75, 8-927-668-96-96.

56.Лечение алкоголизма. г.Чеб-ры, ул. Энгельса, 2. **Т. 62-11-84.** *Лиц. ЛО 2101000772 МЗ ЧР. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

ПРОДАЮ

8.Гравмассу, песок, щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок**, керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

12.Профнастил, металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, трубы профильные, водостоки, дымоходы. Доставка. **Т. 44-44-33.**

25.Гравмассу, керамблок, песок, щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

28.Гравмассу, щебень, песок, **керамзит** – с доставкой до 30 т. за рейс; **бетон.** Скидки. Т.: 387015, 89276687015.

33.Гравмассу, песок, **щебень,** гравмассу, **керамзит,** торф – недорого. Доставка. Т. 89053465671.

37.Гравмассу, песок, щебень**.** Доставка. Т. 89061355241.

78.Блоки керамзитобетонные от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

150.Дымоходные трубы из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

782.Керамблоки 20х20х40. Доставка. Т.: 48-92-77, 89033899038.

881.Гравмассу, песок речной, карьерный, **щебень** – доставка от 5 до 15 тн.; керамблоки от производителя. Недорого. Т. 89023282667.

885.Отруби, зерно, к/корм, сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

907.Отвалы, щётки, погрузчики на трактора. Низкие цены. Всё новое. Тел.: 8-927-851-68-58, /8352/ 40-67-65.

КУПЛЮ

872.Бычков, коров, **тёлок,** овец, **свиноматок.** Т. 8-927-999-37-37.

РАБОТА

875.Кладовщики, комплектовщики, грузчики. З/п 33000 руб. Вахта. МО. Прямой работодатель. Т. 89278512030.

876.Водители-экспедиторы. З/п 38000 руб. Вахта. МО. Прямой работодатель. Тел. 8-927-851-20-30.

877.Охранники с удостоверением. З/п 36000 руб. Вахта. Москва. Прямой работодатель. Т. 89278512030.

СУТАТĂП

909.Чуптарнă пăру – Красноармейски р-че. Т. 89373803677.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800,
"Хыпар"-шăмат кун" – 78353,
"Çамрăксен хаçачĕ" – 54804,
"Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515,
"Сывлăх" – 11524,
"Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Ю.П.СТЕПАНОВ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренÿ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерÿсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Çç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.
hypar2008@rambler.ru
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: pop408@rambler.ru hypar@mail.ru
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.
РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРÎСЕНЕ 316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтер